Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУЛЬ 29 ЕРНЕКУН
173 (4986) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ Пĕр №-рĕ 10 пус.

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати
ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—58, Редакци секретарĕн 1—40, Дежурнăйăн 0—23

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пĕррремĕш çессийĕ

Социалисăмлă демократисăм йалавĕпе

Республикăри ĕçсыннисем хăйсем суйланă представителĕсем—ЧАССР Верховнăй Совет депутачĕсем мĕнле ĕçленине пысăк тимлĕхпе сăнаса тăраççĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕ халăхпа, хапрăксемпе, савăтсемпе, колхозсемпе, суйлавçăсемпе тачă çыхăнса ĕçлет.

Депутатсем ийунĕн 26-мĕшĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăланă суйлавçăсем хушнă ĕçсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе большевикла тимлĕхпе ĕçлеççĕ. ЧАССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççи ĕçĕсем çинчен пĕлтернине рабочисем, колхозниксем, пĕтĕм ĕçсыннисем пысăк хаваслăхпа, савăнăçпа кĕтсе илеççĕ. Суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене тата тепĕр хут: ленинла ĕçлĕр, сталинла ĕçлĕр, государствă ĕçĕсене васкамасăр, тĕплĕн шухăшласа тăвăр, епĕр кашни хамăр участкăри ĕçсене лайăхлатма тăрăшатпăр, тесе калаççĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн аслă оргăнĕн çеççине тырпула пухса кĕртес ĕçе вăйлатнипе, хапрăксавăтсен ĕçĕнче, культурă фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерÿсем тунипе саламлать.

Çеççи пысăк ыйтусене пăхса тухса татса пачĕ. Ийулĕн 27-мĕшĕнче ЧАССР Конституцийĕ тăрăх Саккунсем хатĕрлекен Комиççине тата Буджет Комиççине суйларĕ, Мандат Комиççи докладне итлерĕ. Округсенчен тăратнă пур материалсене те пăхса тухсан, Мандат Комиççи Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсене 96 округĕнче те ЧАССР Конституцийĕ тата хамăр республикĕн Верховнăй Советне суйламали Положени тăрăх тĕрĕс суйланă тесе йышăнчĕ.

Верховнăй Совет депутатне чăваш халăхĕн чи лайăх, чи шанчăклă представителĕсене, коммуниссен партти, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ вĕрентсе çитĕнтернĕ çынсене суйланă.

Депутатсем хушшинче епĕр малта пыракан колхозниксене, сталинла тырпулшăн пыракан кĕрешÿ организаторĕсене, социалисăмлă хапрăксемпе савăтсенчи стахановецсене, совет интеллигенцин представителĕсене, партипе совет организацисен руководителĕсене куратпăр. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем хушшинче рабочисем 29, хресченсем 41, служащисем, совет интеллигенцин представителĕсем 26. Депутатсем хушшинче партработниксем 17, совет ĕçĕнче ĕçлекенсем 28, учителсем 5, йалсовет председателĕсем 7, колхоз председателĕсем 6, бригадирсемпе тракторисем 6, пичет ĕçĕнче ĕçлекенсем 3 тата ытти ĕçре ĕçлекенсем 11.

Чăваш ĕçсыннисен патша саманинчи йăвăр, хĕнхурлă пурнăçне аса илсен, социалисăмлă революци хыççăнхи çулсенче Чăваш республикĕ хуçалăхпа культурă тĕлĕшĕнчен мĕнле мала кайнине депутатсен составĕ йар уççăн кăтартать. Депутатсем хушшинче 18 çулхисем те, 50 çулран иртнисем те пур. Çак факт пирĕн совет çĕршывĕнче çамрăксен те, ваттисен те пĕр интерес, пĕр ĕмĕт—совет государствине, хамăрăн тăван çĕршыва тĕреклетесси пулнине кăтартать. Депутатсем хушшинче чăвашсем, вырăссем, тутарсем, йеврейсем, грузинсем, армйансем пулни ленинла-сталинла наци политикин çĕнтерĕвĕ çинчен, Совет Сойузĕнчи халăхсен сталинла туслăхĕ çинчен калать.

Совет Сойузĕнче хĕрарăм арçынпа пĕртан. Октябер революци ăна чуралăхран, пусмăрлăхран кăларчĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне 26 хĕрарăм суйланни—чăваш хĕрарăмĕ государствăна тытса тăрас ĕçе активлăн хутшăнни çинчен калакан факт. Капиталисăмлă çĕршывсенче хĕрарăмсен суйлама та суйланма та права çук. Фашисла çĕршывсенче хĕрарăмсене: „ача çурат, кăмака

умĕнче ĕçле, кĕпе-йĕм çу, упăшкун тарçи пул, сана урăх нимĕн те кирлĕ мар" тенĕ „принципа" пусмăрта, тĕттĕмлĕхре, чуралăхра тытаççĕ. Вĕсем, хĕрарăмсем, политикăлă права çинчен, государствăна тытса тăрас ĕçе хутшăнасси çинчен ĕмĕтленме те пултараймаççĕ. Пирĕн çĕршывра, Сталинла саманара çеç хĕрарăмсем телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа пурăнаççĕ.

Çеççи Чăваш АССР Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусем кĕртрĕ. Çав улшăнусем ССР Сойузĕн тата РСФСР Конституцин уйрăм статйисем улшăнниччен тухса тăраççĕ. Вĕсем пуринчен ытла уйрăм наркоматсен йенĕпе пулаççĕ. Самахран, хатĕрлев комитечĕн уполномоченнăйĕ вырăнне, хатĕрлевсен халăх комиссариачĕн уполномоченнăйĕ пулать т. ыт. те. Çакăн пекех Çеççи Конституцин чăвашла текстĕнчи йăнăшсене тÿрлетсе тухрĕ. Конституци статйисенче тунă уйрăм улшăнусем вĕсем пурте епĕр малала ÿссе пынине кăтартакан фактсем пулса тăраççĕ.

Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çĕнтерни совет халăхĕн пĕрлĕхĕ çирĕппине кăтартать.

Чăваш халăхĕ аслă вырăс халăхĕпе, ССР Сойузĕнчи халăхсемпе тăванлă туслăхра. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен депутачĕсен хăйсен пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пултарулăхне хамăрăн тăван çĕршыва—Совет Сойузне малашне те чечеклентерессишĕн, çирĕплетессишĕн кĕрешес ĕçе хумала, ку вăл Чăваш халăхĕн телейĕшĕн кĕрешессине пĕлтерет.

Чăваш АСС Республикĕн пĕрремĕш созыври Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççин 1938 çулхи ийулĕн 28-мĕшĕнче пулнă ларăвĕ çинчен

Информацилĕ пĕлтерÿ

Ийулĕн 28-мĕшĕнче, кăнтăрла 2 сехетре, ЧАССР Республикĕн пĕрремĕш созыври Пĕрремĕш Çеççин виççĕмĕш ларăвĕ пулчĕ.

Ларăва председател пулса йертсе пыраканĕ—Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Председателĕ депутат Н. П. Павлăв.

Верховнăй Совет кун йĕркин 3-мĕш пунктне—ЧАССР Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртесси çинчен калакан пункта пăхса тухасси çине куçать.

Кун йĕркин 3-мĕш пункчĕ тăрăх депутат А. М Краснов доклад турĕ.

ЧАССР Верховнăй Совечĕ ЧАССР Конституцин (Тĕп Саккунĕн) хăшпĕр статйисене кĕртме тăратнă улшăнусемпе хушусем çинчен çавăн пек постановлени йышăнать:

ССРС Конституцин 70,78 тата 83-мĕш статйисене тата РСФСР Конституцин 47, 54, 69, 96 тата 99-мĕш статйисене улшăнусем кĕртнĕ май, Чăваш АССР Конституцин çак статйисене улшăнусем кĕртес:

„44 статйари „Шалти суту-илÿ" сăмахсене „Суту-илÿ" сăмахпа, „ССРС Заготовкăсен комитечĕн уполномоченнăйĕ" сăмахсене „ССРС Заготовкăсен Халăх Комиссариачĕн Уполномоченнăйĕ" сăмахсемпе улăштарас;

63 тата 66-мĕш статйисенчи „Шалти суту-илÿ" сăмахсене „Суту-илÿ" сăмахпа улăштарас".

Унтан ЧАССР Верховнăй Совечĕ кун йĕркин 4-мĕш ыйтуне чăвашла кăларнă ЧАССР Конституцин текстне тÿрлетÿсем кĕртесси çинчен сÿтсе-йавать.

Ку ыйтупа Çеççи Н. М. Çеменăв депутат докладне итлет.

ЧАССР Верховнăй Совечĕ ЧАССР Конституцин тÿрлетÿсем кĕртнĕ статйисене уйрăмăн сасăласа йышăнать.

Кун хыççăн, ЧАССР Верховнăй Совечĕ ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсене депутат обйазăннăçĕсене пурнăçа кĕртнĕ чух тухакан расхутсене тÿлесси çинчен тăракан ыйту çине куçать. Депутат А. П. Йерофейев сĕннипе ЧАССР Верховнăй Совечĕ çапла йышăнать:

„1. Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăн Верховнăй Совечĕн депутачĕсене депутат обйазăннăçĕсене пурнăçа кĕртнĕ чухне тухакан расхутсене валли уйăхсерен виççĕршер (300) тенкĕ парса тăмала тăвас.

2. Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикăн Верховнăй Совечĕн Çеççийĕ вăхăтĕнчи расхутсем валли депутатсене сутăчнăй 50 шар тенкĕ парса тăмала тăвас.

3. ЧАССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем валли ЧАСС Республикĕн мĕн пур чукунçулĕсемпе шыв çулĕсем тăрăх çÿреме йаланах тÿлевсĕр билетсем памала тăвас.

4. ЧАССР Верховнăй Совечĕн смети тăрăх ЧАССР Верховнăй Совечĕн председателĕ распорйаженине депутатсемпе çыхăнса тăмали тата представителстă расхучĕсене валли çулталакра 50.000 тенкĕ памала тăвас".

Çак ĕçсене тунă хыççăн ЧАССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççин виççĕмĕш ларăвĕ хупăнать.

Чăваш АССР Конституцин хăшпĕр статйисене улшăнусем кĕртесси çинчен депутат М. Краснов тунă доклад

Ийулĕн 28-мĕшĕнчи лару

Чăваш халăхĕн халь ĕнтĕ хăйĕн Конституцийĕ—Сталинла Конституцирен тухса тăракан Конституци—пур. Ун çинче халăхăн аслă прависене çырса хунă.

Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисем Сталинла Конституцине вĕçĕ-хĕррисĕр йуратаççĕ, вăл Конституци пур национальнăçсене те пĕртэн правасем çирĕплетсе пачĕ, пурне те тивĕç, пĕртан тата тÿрех суйламали суйлав правин принципĕсене çырса хучĕ, тата вĕсене пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртсе пыма май парать.

Совет Сойузĕнчи халăхсемпе пирĕн Чăваш республикĕн халăхĕ çаксене пурне те ĕнтĕ социалисăм строительстви пуçĕнче хамăрăн пĕтĕм Сойузри Коммунисла партти, хамăрăн çулпуçăмăр Сталин йулташ тăрса йертсе пынипе турĕç. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Депутат йулташсем, Конституцине улшăнусемпе хушусем кĕртесси вăл ССРС Верховнăй Совечĕн 1-мĕш Çеççипе РСФСР Верховнăй Совечĕн 1-мĕш Çеççийĕ ССР Сойузĕн тата РСФС Республикĕн Коституцийĕсен хăшпĕр статйисене улшăнусемпе хушусем кĕртме йышăнниччен тухса тăрать.

ССРС Верховнăй Совечĕ ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи йалхуçалăх продукци Заготовкисен Комитетне пĕтĕм Сойузри Заготовкăсен Халăх Комиссариачĕ туса хучĕ тата Шалти Суту-илÿ Халăх Комиссариатне Суту-илÿ Халăх Комиссариачĕ тесе йат пачĕ.

Çакăн тăрăх ĕнтĕ Чăваш АССР Конституцин çак статйисене урăхлатса çырма сĕнес пулать.

44-мĕш статйара „Шалти Суту-илÿ" сăмахсене „Суту-илÿ" сăмахпа улăштарас пулать, „ССРС Заготовкăсен комитечĕн уполномоченнăйĕ" сăмахсене „Заготовкăсен Халăх Комиссариачĕн уполномоченнăйĕ" сăмахсемпе улăштарас пулать.

63-мĕшпе 66-мĕш статйасенче „Шалти Суту-илÿ" сăмахсене „Суту-илÿ" сăмахсемпе улăштарас пулать.

Хамăр Чăваш республикĕн Конституцин хăшпĕр статйисене кĕртмели, Чăваш АССР Верховнăй Советне çирĕплетме тăратмали улшăнусемпе хушусем çаксем пулаççĕ ĕнтĕ. (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Депутат Н. М. Çеменăв Мандат Комиççи докладчĕ тăрăх каланă сăмахран

Ийулĕн 27-мĕшĕнчи лару

Депутат йулташсем! 1938 çулхи ийунĕн 26-мĕшĕ чăваш халăхĕн историне унăн пурнăçĕнчи чи телейлĕ кун пулса кĕчĕ,—çак кун ĕмĕрлĕхе асра йулĕ. Вăл кун Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисем пысăк хаваслă пулса хăйсен сассисене савăнсах коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн пачĕç. Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, чăваш халăхĕ Ленин—Сталин партишĕн, Совет влаçĕшĕн сасăларĕ.

Сталин йулташ аслă Ленинпа пĕрле большевиксен партине пуçарса йанă, ăна пĕтĕм тĕнчери историлĕ çĕнтерÿсем патне илсе çитерчĕ.

Сталин йулташ йертсе пынипе, епĕр çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пыратпăр. Вăл йертсе пынипе, халăх ташманĕсен—тротскисла, бухаринла, буржуалă-националисла фашисла бандăсен тĕп йăвисене тупса аркатса тăкнă.

Чăваш халăхĕ, Совет Сойузĕнчи ытти пур халăхсемпе пĕрле, хăйĕн телейлĕ пурнăçне аслă Сталина пула турĕ. Çавăнпа вăл Ленинăн—Сталинăн никам çĕнейми аслă йалавне хĕпĕртесе çÿлĕ тытать,—ийунĕн 26-мĕшĕнче калама çук пысăк савăнăçпа Сталин йулташшăн тата унăн шанчăклă соратникĕсемшĕн сасăларĕ. Çакă вăл Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисен хавасăлăхĕн, производствари хастарлăхĕн çĕнĕ хумне çĕклерĕ. Пирĕн республикĕн аслă оргăнĕнче—Верховнăй Совет депутачĕсен хисепĕнче аслă Сталинпа унăн соратникĕсем пур,—çавăнпа республикĕн социалисăм строителстви пĕр участокĕнче те кайа йулмала мар. Верховнăй Совет депутачĕсен социалисăм строителствин участкисенче ĕçсенчекайа йулвине пĕтерме пур ĕçсене те тумала.

Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавĕсен итогĕ калама çук чаплă. Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсене пурне те Верховнăй Совет депутатне суйланă. Çакăншăн Чăваш республикĕнчи пĕтĕм ĕçсыннисем хĕпĕртесе савăнаççĕ.

Суйлавсем чăваш халăхĕн моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне, коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ хăватлине, никам çĕмĕрейми çирĕппине кăтартса пачĕ.

Йулташсем—депутатсем! Суйлавсем чаплă иртни пирĕн чĕресене хамăрăн тăван çĕршывшăн, хамăрăн телейлĕ халăхшăн вĕçĕмсĕр савăнтарать.

Пĕтĕм чăваш халăхĕ аслă Сталина тата унăн соратникĕсене—Молотăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Микойан, Андрейĕв, Йежов тата Жданăв йулташсене депутата суйларĕ,—çавăншăн епĕр вĕçĕмсĕр хĕпĕртесе савăнатпăр.

Чăваш АССР Верховнăй Совет суйлавĕсем совет хĕрарăмĕ, ĕлĕк кайа йулнăскер, чура пек пурăннăскер, калама çук пысăк вăй пулса тăнине кăтартса пачĕ. Совет влаçĕ хĕрарăма пусмăртан хăтарчĕ, общĕствăн пĕртан правăлă членĕ туса хучĕ. Чăваш республикĕнче сахал мар хĕрарăмсем совет, хуçалăх, партти ĕçĕнче ĕçлеççĕ.

Политикă тĕлĕшĕпе ÿссе çитĕннĕ пиншер çамрăксем общĕствăлă-политикăлă пурнăçа активлă хутшăнаççĕ. Вĕсен чи лайăх представителĕсене Чăваш АССР Верховнăй Совет депутатне суйланă.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче Чăваш республикĕнчи ĕçсыннисем хăйсен патриотисăмне, Ленин—Сталин партийĕ тавра çирĕп пĕтĕçсе тăнине, моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне кăтартрĕç. Çакă вăл пирĕн тăван çĕршыва никам çĕмĕрейми крепăç туса хурать, çак крепăçа пырса çапăнса фашисла агрессăрсем—çав çынçийĕнсем—тата вĕсене тарă кĕрешнĕ троцкисла-бухаринла, буржуалă националисла бандитсем пурте аркацса кайĕç.

Вăрçă вутне чĕртекенсем çапцийе хирĕç çапса ответлĕме халăха хатĕр тытмала. Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокне, совет халăхĕн моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне малала çирĕплетсе пымала,—вăл коммунисăм çулĕпе малала çĕнтерÿлĕн кайма кирлĕ.

Сывă пултăр Ленинăн—Сталинăн аслă партийĕ!

Сывă пултăр пирĕн аслă та йуратнă çулпуçĕ, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн пĕрремĕш депутачĕ Сталин йулташ! (Тăвăллăн алă çупаççĕ)

Епĕ Мандат Коммиççин отчотне, унăн вывăчĕсене ырлатăп. Мандат Комиççин постановленине çирĕплетме сĕнетĕп.

Белоруççи ССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççинче

Ийулĕн 27-мĕшĕнче Белоруççи ССР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççийĕ Верховнăй Совет Президиумне суйланă.

Белоруççи ССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ пулма Н. Й. Наталевич депутата суйланă; Председателĕн Заместителĕсем пулма С. П. Мельникăв тата С. И. Мальцĕв депутатсене суйланă.

(ТАСС).

Депутат К. Иванов Мандат Комиççи докладчĕ тăрăх тухса каланă сăмах

Ийулĕн 27-мĕшĕнчи лару

Депутат йулташсем! Чăваш Автономлă Советлă Социалисăмлă Республикĕн Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççи трибуни çинчен епĕр Чăваш АССР Верховнăй Советне суйланă чухне коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ таткăланах çĕнтерни çинчен калакан фактсемпе цифăрсене тепĕр хут илтрĕмĕр.

Çак фактсемпе цифăрсем чăваш ĕçсыннисем пирĕн аслă коммунисла партине тата унăн çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнине палăртса параççĕ, ку вăл чăваш халăхĕн чăннипех пĕтĕм халăхлă парламĕнтне чăн-чăн демократилĕ йĕркепе суйланин результачĕ пулса тăрать.

Чăваш ĕçсыннисем, аслă Совет Сойузĕнчи мĕн пур халăхсем пекех, хăйсен чи аслă влаç оргăнне пĕрремĕш депутата халăхсен йуратнă çулпуçне Иосиф Виссарионăвич Сталина суйларĕç (тăвăллăн, нумайччен алă çупаççĕ), унăн сывăх тата чи лайăх соратникĕсене суйларĕç. Аслă коммунисла партти вĕрентсе ÿстернĕ 67 чи лайăх çынсем, партире тăман вуншар большевиксем, социалисăмлă ĕçĕн хайулă патриочĕсем, бригадирсем, тракторисем, стахановецсем, стахановкăсем, станочницăсем, йалсоветсемпе колхоз председателĕсем, çар-ĕç служащисем, учителсем—акă пирĕн халăхăн представителĕсем.

Акă вăл социалисăмлă суйлавсен результачĕсем, чăн-чăн демократи тата чăваш халăхĕн никам аркатайми пĕрлĕхĕн тĕслĕхĕ, вĕсене епĕр Совет влаçне пулăшса, ленинла-сталинла наци политикине тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынине, аслă большевиксен партине тата Сталин йулташа пула турăмăр. (Тăвăллăн алă çупаççĕ). Ĕлĕкхи çын çĕр чăмăрĕн пĕр улттăмĕш пайĕнче хăйĕн пурнăçĕпе хăй хуçа пулса тăрасси пиншер çулсем иртнĕ. Пĕр рабочи клас çеç капиталисăма тĕппипех çапса аркатса ĕçсыннин хресченĕсен йышлă массине хăйĕн хыççăн çĕнĕ пурнăç патне ĕçсе кайма пултарчĕ. Большевиксен партийĕ çеç, пролетарилĕ революцин аслă стратегĕсем Ленинпа Сталин çеç пулнă пирĕн нацилĕ Совет Сойузĕнчи рабочисемпе хресченсене хаваслă, телейлĕ пурнăç туса пачĕç.

Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕсен составĕ пирĕн çĕршывра социализм тапăкланах çĕнтернине, мĕнле социалисăмлă çийрен тухнине тата мĕн чухлĕ вĕренни пăхмасăрах мĕн пур ĕçсыннисем ирĕклĕнне тата пĕртан правине палăртса парать.

Хăй ĕçлени, ĕç çине социалисăмлă тÿрĕ кăмăлпа пăхни, коммунисăмăн аслă идейишĕн тăрăшни—çаксем тăрăх халăх рĕç ĕнтĕ пирĕ, хамăр суйлавçăсем хăйсен Верховнăй Советне суйлама кайнă чухне.

Пирĕнни пек пĕтĕм халăхпа суйланă парламĕнт çинчен капиталисăм тĕнчи тĕлленме те пултараймасть. Унта ĕçлекен çын государствă дейателĕ таран çĕкленме пултараймасть, çук та, мĕншĕн тесен, ку вăл капиталисăма тÿрех хирĕç пыни пулĕччĕ. Унта пирĕнни пек пĕрлĕх пулма пултараймасть, çук та, мĕншĕн тесен буржуалă парламĕнт—вăл експлоататăрсен нĕчĕк ушкăнĕн оргăнĕ пулса тăрать, çав оргăн експлоататăрсен интересĕсене хÿтлет, унта нацисемпе государствă интересĕсем уйрăм капиталиссен интересĕсене пăхăнса тăраççĕ, çав капиталиссем хăйсем ытларах пуйас тесе пĕр-пĕрне кышласа татма та, ĕçсынни массисене йупăшне путарма та хатĕр.

Вырăс самодержавийĕ ĕлĕк халăхсен тĕрми пулнă, вăл ĕмĕрсем хушши çукалăхпа хут пĕлменлĕхе вăйлатса пынă.

Анчах та чăваш ĕçсыннисем Совет Сойузĕнчи мĕнпур халăхсемпе пĕрле коммунисла партти йертсе пынипе 1917 çулта самодержавине сирпĕтсе, антарчĕç те хăйсен ирĕксĕрлĕхне, чухăн пурнăçне ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хучĕç. Октябĕрти социалисăмлă революци çеç пире наци телей патне, тулă та çутă пурнăç патне, аслăлăхпа искусствă патне кайма аслă çул уçса пачĕ. Большевиксен партийĕ тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ аслăн йертсе пынипе, епĕр лайăх тĕнчере чи ирĕклĕ, чи пуйан та илемлĕ çĕршывра пурăнма телейлĕ пултăмăр. Ахаль мар чăваш ĕçсыннисем Сталин йулташа хăйсен чи сывăх тусĕ тесе калаççĕ (тăвăллăн алă çупаççĕ):

Сывăхран та сывăх СТАЛИН!
Çут хĕвел ес çĕн тĕнчен!
Асларан асла пахчаçă.
Çут хĕвелĕмĕр, йалав!
Пуратса пăхсă ÿстертĕн
Ес пире çултан çул.
Епир кăмăллă çулпуçĕ
Пур çĕрте те, уя пирĕн
Пĕрă йат çÿрет пайан кун:
„Ĕçченсен республики".

Пирĕн çĕршыв чечекленекен пурнăçăн тата культурăн тăван çĕршывĕ пулса тăчĕ. Халăхăн ирсĕр тăшманĕсем фашисăм тарçисем çав çĕнĕ ăнăçсене пĕтерсе туртса илесшĕн пулчĕç, анчах социалисăм çĕршывĕнчи рабочисемпе хресченсем кирек мĕнле тăшмана та, вăл кирек хăш йенчен килсен те, аркатса тăкмалăх çапса хума хатĕр.

Чăваш ĕçсыннисем хăйсен Верховнăй Советне суйланă чухне хăйсен пĕрлĕхне тата коммунисла партийĕшĕн йулташ йĕрĕнчен тăнине кăтартма пултарнине пулăшни, ĕç хатĕрĕсене оборона кĕçĕрешлĕнне уйăн тăрăн тĕл килсен те хăйсен пĕрлĕхне ĕнентерсе пама пултарĕç. Сталин çĕçĕ аннан та çĕнтеме пултараймаççĕ тăшмансене пама пултарĕç! (Тăвăллăн алă çупаççĕ).

Татах та лайăхрах ĕçлеме пулатăп

Çамрăкла, ача чухнех нуша курса ÿснĕ епĕ. Вуниллĕк çула çитсен аттем вилсе кайрĕ. Çавăн хыççăн вара çын тарçи пулса ĕçлеме тытăнма лекрĕ. Мĕн-мĕн курманши хамăн пурнăçра епĕ? Шанçа йе выçă çÿрени сахал мар пулнă. Талăкра 17-шер сехет ĕçлесе те 12 пусран ытлашшине илеймен. Ситменне тата хĕрарăм тесе, çын вырăнне те хуман. Час-часах пирĕнтен „çÿç вăрăм та ăс кĕске" тесе кулнă.

Октябăрти социализмлă революци нушалăхра асапланса пурăнакансене ирĕке кăларчĕ. Çĕршывра çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ. Çак 20 çул хушшинче совет çĕршывĕ никам çĕнтерейми çĕршыв пулса тăчĕ.

Çаксене пурне те аса илетĕп те, тĕлĕнетĕп епĕ. Кам пулнă пулăттăм-ши епĕ ĕлĕкхи патша саманинче пурăннă пулсан? Çын патĕнче тарçăра хен-хур курса пурăнни çĕр пуçне, урăх нимех те пулма пултараймăн.

Совет влаçĕ, коммунистсен парти йертсе пынипе, ман пурнăçа кăна мар, пĕтĕм ĕççыннисен пурнăçне лайăхлатрĕ. Епĕ хутла пĕлмен тĕттĕм чăваш хĕрарăменчен çĕршыва усăллă, шанчăклă çын пултăм. Халĕ епĕ хут пĕлетĕп, производствăра та, ĕç техникине алла çавăрса илнĕ май, лайăх ĕçлетĕп. Кăну правипе те усă куратăп.

Иртнĕ çулта пулнă стахановецсен канашлăвĕнче епĕ хамăн ĕç нормине 500 процент тултарса ĕçлеме обязательствă илнĕччĕ. Ку обязательствăна пурнăçларăм, апрелĕн 29-мĕшĕнче нормăна 564 процент тултартăм. Ку çулти плана та ийуль уйăхĕнче пурнăçларăм.

Паллах, тăрăшса ĕçлесен тата лайăхрах ĕçлеме пулать. Анчах хăшпĕр çитменлĕхсем ĕçре чăрмантараççĕ. Çав çитменлĕхсем пулнă пирки те ентĕ комбинат плана тултарса ĕçлеймест. Ĕç вырăнĕсене лайăххăн организацилемен, техникăна вĕренесси, кадрсем хатĕрлесси çителĕксĕр пырать, материал çитменни те чылай чăрмав кÿрет. Пайанхи куна комбинат руководителĕсем вĕсене пĕтересси шĕн начар ĕçлеççĕ-ха. Ĕçре çивĕчлĕх, конкретлăх сахал. Хăшпĕр чухне „материал" çук тесе найкăшма пăхаççĕ. Çав вăхăтрах куç умĕнче выртакан материала та курмаççĕ. Ака нумай ĕх та пулмасть пирĕн столярнăй цехра урай шăлмалли шăпăр ем пĕтсе çитрĕç. Ĕç ан чарăнса тăтăр тесе, курăксемпе шăпăр çыхса пурăнчĕç. Çав вăхăтрах ĕçе тĕреслеремер те, комбинат çумĕнче темĕн чухлĕ курăс сапаланса выртнине тупрăмăр. Çавăн пекех пăчкă çитместтеççĕ, пăчкă çителĕклĕ, анчах складра выртнă пирки вĕсене курмаççĕ.

Пайанхи куна столовăй, учот ĕçĕ те йапăх-ха. Столовăйĕнче çăкăр, компот, конфетсăр пуçне нимех те çук. Хăш чухне вĕсем те çителĕксĕр.

Çитменлĕхсене пĕтерсен, паллах, план ытлашшипех пурнăçланса пымала. Хуçалăх организацисемпе партипе совет организацисен алла-аллăн тытăнса ĕçлени кирлĕ.

Манăн производствăра çав тери ĕçлес килет. Епĕ ĕçрен хăрамастăп Çапла кирлĕ те. Кăçалхи çулталăк планне çак уйăхра тултартăм пулсан, çак çул вĕçне епĕ тата çавăн чухлĕ продукци туса кăларма сăмах паратăп.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе совет çĕршывĕ кунран кун вăйланса, çирĕпленсе пырать. Çавнамай ĕçхалăхĕн пурнăçĕ те лайăхланса пырать. Йепле савăнса ĕçлес мар-ха çак саманара! Епĕ хамăн суйлавçăсене çакна калăсшăн: вĕсем мана депутата суйласа пысăк шанăç пачĕç. Çав шанăçа пурнăçлассишĕн малашне те пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулатăп.

Çĕмĕрле комбинатĕнчи стахановкă, Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ З. КАÇЙАНĂВĂ.

Ответлă ĕçе

ШĂХАСАН. (Хамăр корр.). РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кампанийĕнче хăйсен пултарулăхне кăтартнă çынсене ответлă вырăнсене куçарса пыраççĕ.

Иртнĕ суйлав кампани вăхăтĕнче Титов йулташ участкăри суйлав комиссийĕн председателĕ пулса ĕçлерĕ. Халĕ ăна районри социальнăй обеспечени пайĕн пуçлăхне лартнă.

И. Петров йулташ 1931 çултанпа йалсовет çумĕнчи финанс секци членĕ пулса ĕçленĕ. 1933 çулта укçа-тенкĕ пухас ĕçре кăтартулă ĕçленĕшĕн ăна Пĕтĕм Рассейри Ĕçтăвакан Тĕп Комитет грамата тата ударник значокĕ парса премиленĕ. Мĕн пурĕ 3 хутчен преми илнĕ. Суйлав вăхăтĕнче агитатăр пулса ĕçлерĕ. Халĕ ăна районри финанс пайне ĕçлеме агента илнĕ. Унта вăл пухăнса пĕтмен налогсене 2559 тенкĕ пухса плана пурнăçларĕ.

Феодора Çергейĕвă 1934 çултанпа йалсовет членĕ. Вăл хăйне шанса панă ĕçсене лайăх пурнăçласа пынă. „Звезда" колхозри Феодора Çергейĕва 1936 çултанпа колхозра звеноводра ĕçлет. Унăн 12 хуçалăхран тăракан звено иртнĕ çул пур звеносенчен те вăйлă тырпул туса илнĕ. Н. Михайлăв.

Парти пурнăçĕ

Йĕпреç вăрманпромхоз çумĕнчи пуçламĕш организаци

Йĕпреç вăрманпромхозĕнчи пуçламĕш парторганизаци пĕчĕк мар—10 член, 4 кандидат, 2 сочувствующи. Кун чухлĕ вăйпа ĕçе аванлатма май пур. Анчах мĕн куратпăр епĕр?

Парти вĕренĕвне вăрманпромхозра организацилемен. Нумай коммунистсем ниçта та вĕренмеççĕ. Саперăв коммунис парткабинет çумĕнчи ленинизм кружокĕнче вĕреннĕ пекки тавать, анчах вăл 10 занятирен пĕринче çеç пулнă. Çавăн пекех Рыжова, Данилăв, Çеменăв йулташсем те йапăх вĕренеççĕ. Парторг Николайĕв парти вĕренĕвне лайăхлатасси пирки ним те тумасть, хăй те ниçта та вĕренмест.

Коммунистсем хушшинче сыхăлăха вăйлатса пыни те курăнмасть. Нумай пулмасть Цыпленкин ÿсĕрпе хăйĕн парти билетне çухатнă. Ку фактран кирлĕ пек урок туман. Парти ретне ÿстерес ĕç начар тăрать. Рыжова, Çеменăв, Саперăв, Данилăв йулташсем парти кандидачĕнче 1931 çултанпа тăраççĕ, вĕсене пулăшни çук. Кандидатсем парти вĕренĕвĕн кружокĕсене çÿресе хăйсен пĕлÿне ÿстермеççĕ.

Парти кандидачĕсене вĕрентес ĕçе Николайĕв йулташ районти парткабинет çине шаннă. Партине кĕрес текен йулташсене кирлĕ пек пулăшмасть. Сăмахран, автобазăри трактăрис Шалагăн, Кармалари асла лесничий Афанаçйĕв йулташсем май уйăхĕнчен заявленисем панă. Вĕсен заявленисене халь те пăхса тухман. Парти ретне ÿстересси çине çапла пăхнă пирки, кăçал партине пĕр çынна та илмен.

Парти хуçалăхне лайăх йĕркелесе пыни çук. Пухура тухса калакансен сăмахĕсем йăнăш çапăнаççĕ, вĕсене кайран тÿрлетмеççĕ. Отчетпа-суйлав пухăвĕн протоколне 2 екземпляр çелесе хунă, çавăнтах хăшпĕр протоколăн решенисем çук, сăмахран йулашки пухăвăн решенине, вăрманпромхоз директăрĕ Шипунов таçта çухатнă. Пайанхи куна та шыраса тупман. Пĕр протоколăн та номĕрĕ çук. Машинкă пур çинчех хăшпĕр протоколĕсем кăранташпа çырнипех выртаççĕ. Ку протоколсене ПСК(б)П райком секретарĕ Медникăв пăхса тухнă, çавах та темшĕн улшăну çук. Вăрманпромхоз парторганизацийĕ партилĕ-политикăлла ĕçе хуçалăх ĕçĕпе çыхăнтарма пĕлмест. Вăрманпромхоз хăйĕн планĕсене тултармасть. 2-мĕш квартал планне вăрман хатĕрлессипе 37 проц., вăрман турттарассипе 39 процент анчах тултарнă. „Ĕç вăйĕ çитмест", теççĕ. Ăна тупас шутпа ĕçлени çителĕксĕр. Рабочисем хушшинче политикăлла массăлла ĕçе организацилемен. Каргин коммунис рабочисен ĕç укçине хăй çумне хăварнă.

Вăрманпромхоз калама çук йапăх ĕçленипе апрел уйăхĕнче 70 пин тенкĕлĕх убыткă пулнă. Социализмлă пурлăха çаратакансемпе вирлĕ кĕрешмен пирки, Буински вăрман складĕнче 2299 фестметр каснă вăрман тухман. Лаша обозĕн йапалисене инвентаризаци тунă хыççăн 7.620 тенкĕлĕх çитменнине тупнă.

А. Михайлăв.

Верховнăй Советăн Çеççине çитĕнÿсемпе кĕтсе илтĕмĕр

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн суйлавĕнче агитацилĕ-массăлла ĕçре нумай лайăх кадрсем ÿсрĕç. Шăнкăртам районĕнче суйлав вăхăтĕнче 153 агитатăр ĕçленĕ. Вĕсем халĕ, пурте тенĕ пекех, хуçалăхла-политикăлла кампанисем иртернĕ çĕре хутшăнса пыраççĕ. Тырпула пухса кĕрес, займ сарас тата тĕрлĕ хатĕрлев планĕсене тултарас ĕçсенче агитатăрсем нумай пулăшаççĕ. Патрекел йалсоветĕнчи рйадовой колхозник Илйазăв йулташ йертсе пыракан агитбригадă хăйĕн мĕн пур ĕçне колхоз бригадисене куçарнă. Ытти йалсоветсенчи агитатăрсем те хальхи вăхăтра уйра, колхозниксен бригадисенче РСФСР Верховнăй Совечĕн Пĕрремĕш Çеççин йышăнăвĕсем çинчен ăнлантараççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ, тĕрлĕ кăларсасем иртереççĕ. Колхозсенче кашни бригадăрах культработниксем уйарнă. Вĕсем бригадăсенче кану вăхăтне культурăлла иртерессине йĕркелеççĕ, стена хаçачĕсем кăларма пулăшаççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Çеççине хатĕрленнĕ май, епĕр хамăр районра чылай палла ĕçсем туса иртертĕмĕр.

Правительствă çĕнĕ займ кăларасси çинчен постановлени кăларсанах пирĕн агитатăрсем халăх хушшинче ăнлантарса пама хастарлăн тытăнчĕç. Пур çĕрте те йышлă митингсем пулса иртрĕç. Малтанхи кунах—митингсенчех—4.593 тенкĕлĕх займ укçи пухнă. Кзыл Чишмара—1.085 т., Патрекелте—790 т., Кив Шăнкăртамра—529 тенкĕ пухнă. Малашнехи кунсенче те епĕр займ сарнă çемĕн укçине пухсах пынă. Ийулĕн 25-мĕшне районра займ 88.390 тенкĕлĕх вырнаçтарнă, укçине 54 523 тенкĕ пухнă. Займ укçине 61,2 проц. пухнă ентĕ. Пĕлтĕр çак кун тĕлне мĕн пурĕ те 1.084 тенкĕ çеç пухнă пулнă.

Чылай йалсоветсенче займ укçи пухса çитерне те. Кзыл Чишма йалсоветĕнче 8.700 тенкĕлĕх займ вырнаçтарса, укçине ийулĕн 23-ш тĕлне пухса çитернĕ. Суринск йалсоветĕнче 7.695 тенкĕлĕх сарса, укçине ийулĕн 24-мĕш тĕлне пĕтĕмпех пухнă. Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ йертсе пыракан Тукай йалсоветĕнче çĕнĕ займа 4.700 тенкĕлĕх вырнаçтарнă. Укçине ийулĕн 25-мĕш тĕлне парса татнă. Çавăн пекех Патрекел, Çĕнĕ Пикшик, Татшуруй йалсовечĕсем те займ укçине çак кунсенче пухса пĕтереççĕ. Çак малта пыракан йалсоветсенче финанс секцисемпе комсодсем аван ĕçлеççĕ. Лайăх ĕçлекенсене финанс активĕн районри канашлăвĕнче премисем патăмăр.

Культурăлла-массăлла ĕçе йĕркелени тырпула ăнăçлăн пухса кĕме май парать. Пирĕн районра пур колхозсем те ийулĕн 17-мĕшĕнче тыра вырма тухрĕç. „Хурçă", „Осоавиахим", „Майак", „Августăн 1-мĕшĕ" колхозсем тата Нариман йачĕпе тăракан колхоз ийулĕн 20—21-мĕшесенчех ыраш вырса пĕтернĕ. Ийулĕн 26-мĕш тĕлне вырман ыраш районра 45 гектар çинче çеç йулнă.

Пайанхи куна çулталăкри хатĕрлев планĕсене пирĕн район çакăн пек тултарнă: аш-какай—52 процент, сĕт-çу—65 проц., çăм—91 процент. Уйрăм йалсоветсем вăл хатĕрлевсен çулталăк планĕсене пĕтĕмпех тултарнă.

Хуçалăхла-политикăлла кампанисенче, кулленхи ĕçре пирĕ—районри работниксене—халăх комиссариачĕсен, республикăри организацисен тимлĕн пулăшни кирлĕ. Анчах çак пулăшăва епĕр хăшпĕр халăх комиссариачĕсенчен кураймастпăр-ха. Уйрăмăнах кунта Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариачĕ çинчен каласа хăварма кирлĕ. Унăн инспекторĕсем (сăмахран Çеменăв) района пырсан финанс органĕсене вĕрентмеççĕ, пулăшмаççĕ. Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Çеççийĕнче чылай халăх комиссариачĕсен ĕçĕсене тивĕçлипе, большевикла тишкĕрĕç.

Шăнкăртам райĕçтăвком председателĕ—Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ Фадкла Сафиуллин.

Партин II-мĕш сйесĕ çинчен лекци

Ийулĕн 27-мĕшĕнче строительсен клубĕнче Шупашкарти парти активĕн пухăвĕ пулчĕ. Пухура Ахазăв йулташ Партин II-мĕш сйесĕ çинчен 2 сехетлĕ лекци вуласа пачĕ. Йулашкинчен ку темăпа вуламалли литературăна кăтартса пачĕ.

Йăнăша тÿрлетни

1938 çулхи йанварĕн 6-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ" хаçатăн „Колхоз йалавĕ" хаçатпа Осипăв йулташăн позицийĕ" йатлă статйара Данилăв Петр Данилăвича буржуалла националистсен шутне кĕртнĕ, ăна 6—7 уйăх хушши ĕçсĕр çÿретернĕ. 1938 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче çеç ăна Вăрмар районĕнчи Мăнçырмари кĕçĕн вăтам шкула учитель пулса ĕçлеме йанă. Халĕ те унтах ĕçлет. Данилăв йулташа националистсен шутне кĕртни тĕрĕс мар.

Çак статйарах О. В. Ваçлйĕв йулташа та тăшманла етемсен шутне кĕртнĕ. ПСК(б)П Йелчĕк райкомĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ Филиппăв „уйрăм колхозсенчен йÿнĕ хакпа йе укçасăрах тырă пуçтарни те сахал мар пулнă. Аслă Йелчĕкри Ленин йачĕпе тăракан колхозран Филиппăва укçасăрах выльăхсем, пысем, тырăсем парса тăнă. Çавăншăн вăл Ваçлйĕв текен тăшманла етеме парти ретне кайала илме пулăшать", тенĕ А. Воробйов статйинче.

Ваçлйĕв йулташа çакăн пек тăшманла етемсен шутне кĕртни тĕрĕс мар. Ваçлйĕв йулташ хальхи вăхăтра Аслă Йелчĕкри кĕçĕн вăтам шкулăн директăрĕ пулса ĕçлет. ПСК(б)Парти членĕ. Учительсене парти историне вĕрентекен кружок руководителĕ. Суйлав вăхăтĕнче агитатăр пулса ĕçленĕ.



Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕсем

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ (сулахайран): Хутар округĕнчен суйланă депутат В. М. ШИШКИН, Йелчĕк округĕнчен суйланă депутат В. М. Немцĕв, Уйкас округĕнчен суйланă депутат И. Й. Йевдокимăв, Тулик Хураски округĕнчен суйланă депутат Н. Ç. ХАБАРĂВ, Шуршăл округĕнчен суйланă депутат Ç. Й. ЙАКĂВЛĔВ, Хучаш округĕнчет суйланă депутат П. Ç. ПОЛТĔВ.

Йем. Йарославский

Партин иккĕмĕш сйесĕ *) вăтăр пилĕк çул тултарни

Партин II-мĕш сйесĕ Брюссельхуличе 1903 çулти ийулĕн 30-мĕшĕнче уçăлнă. Сйес уçăлас умĕн Ленин „черетлĕ II-мĕш сйесăн программине" тĕплĕн хатĕрлесе хунă. Çак сйесăн ĕçĕсен никĕсĕнче „Искра" хатĕрленĕ программă, тактикă тата организацилĕ план пулмала пулнă.

„Искра" редакцийĕ тăратнă парти программийĕ, пысăк дискуççипе тата Ленин тÿрлетĕвĕсене йышăнса туса хатĕрленĕскер, пĕтĕм тĕнчери социал-демократин программисенчен чи лайăххи пулнă. Унта çакăн çинчен уççăн каласа панă пулнă: Рассейри социал-демократилĕ рабочи парти хăйĕн умне социаллă революци тăвас задачă лартать тата „çак социаллă революцин кирлĕ условийĕ пролетариат диктатури, урăхла каласан, пролетариат политикăлла влаçа кĕрешсе илесси пулса тăрать, çав вăл експлоататăрсем пролетариата хирĕç тăрассине пĕтĕмпех пусарма май парать" ¹).

Пролетариат диктатурине кĕрешсе илес умĕн патша тытăмне çĕмĕрсе тăкассишĕн кĕрешесси, буржуалла демократилĕ революцийĕн çĕнтерĕвĕ пулмалла. „Çирĕп" искровецсем ун чухнех, II-мĕш сйесрах, демократилĕ задачăсене ĕçе кĕртсе пыни социализмлă революцишĕн, пролетариат диктатуришĕн малала кĕрешессине çăмăллатакан мел вырăнне хурса шутланă.

Економистсен органĕн—„Рабочее дело" хаçатăн редакторĕсенчен пĕрийĕ, куçкĕрет оппортунис Акимăв, программăран тĕп ыйтăва—пролетариат диктатури кирлине кăларса пăрахма сĕннĕ. Ленинецсем пĕр шухăшлă пулса çав бернштейнианца питĕ çирĕп отпор панă.

Троцкий Акимăвна килĕшнĕ. Çав фашисла хăйар обер-бандит 1903 çултах пролетариат диктатурин тăшманĕ пулнă.

Сйесра тухса каланă оппортунистсем çавнашкалах тата аграрлă программăна та хирĕç тăнă. Мартынăв касса илнĕ çĕр таткисене кайала тавăрас ыйтăва программăна кĕртме кирлĕ мар тесе сĕнÿ панă, мĕншĕн тесен „историлĕ тĕрĕс-марлăха тÿрлетме çук", тенĕ. „Лачака" („болото") представителĕ Махов революцийĕ хресчецсем хутшăнсан, „вăл вара революци мар, реакци пулать", тесе каланă.

Оппортунистсем пурте хресченсен йухăмне пролетариат йертсе пырассине хирĕç пулнă, мĕншĕн тесен вĕсем буржуалла демократилĕ революцинче пролетариат пуç пуласси не хирĕç, пролетариат диктатурине хирĕç пулнă.

II-мĕш сйесра наци ыйтăвĕ тăрăх тавлашни питĕ пысăк, принципллă, историлĕ вырăн йышăннă. Çак тавлашусем пуриччен ытла большевикла партин пĕтĕм историйĕнче социализмлă революцичченех те, çапăх пролетарилле революци вăхăтĕнче те пулса иртнĕ икĕ фронтпа пынă кĕрешĕве палăртса тăракан тĕслĕхсем пулнă, ку кĕрешĕвĕн конкретлă содержанийĕ улшăнса пынă пулсан та, ăна Польшă социал-демократин представителĕсем кашни халăхăн социализмлă культурине, унăн нацилĕ уйрăмлăхне сыхăх формăпа (формă тĕлĕшĕпе нацилĕ, содержанипе социализмлă) аталантарма кирлине хирĕç тăнă. Польшă уклонисĕсем нацисен самоопределени правине—вăл буржуала ыйтăва лартни, вăл мĕн пур çĕршывсенчи пролетариатăн пĕрлĕхне хирĕç пырать, тесе ĕнентерме пăхнă.

Ленин тата Сталин, большевиксем нацисен самоопределени правишĕн тăнă, ăна принципллă ыйту вырăнне хурса хытă хÿтĕленĕ, çавна никĕсе хунипе пролетариат пусмăрта пурăнакан нацисен йышлă ĕçхалăх массисене хăй йенне çавăрса пырать.

1917 çулта апрелти конференцире Ленин тепĕр хут революцишĕн хăрушă люксембургла йăнăшсемпе тĕл пулать. Çав йăнăшсене ун чухне халĕ тăрă шыв çине кăларнă ĕскерсем фашизмăн ирсĕр агенчĕсем—Бухарин, Радек, Пятаков хÿтĕленĕ.

Бундовецсем пĕтĕм Рассейăра йеврей пролетариачĕн пĕрген-пĕр представителĕсем пулма права илесшĕн тăнă. Бундовецсем пролетариатăн наци политикине буржуалла политикăпа улăштарнă, çав вăл пĕрле организацилĕн ĕçлемелле чухне пĕр национальнăçăн ĕçхалăхне тепĕр национальнăçăн ĕçхалăхĕнчен уйăрнă. Бундовецсем Кавказра вĕсемпе пĕр шухăшлисем армйан „спецификĕсем" профсоюзĕсене национальнăççем тăрăх организацилессишĕн тăнă. Бундовецсем парти организацийĕсене федераци принципне тума сĕннĕ.

„Наци ыйтăвĕнчи тĕрлĕрен сулăнчăксене тата пăсăксене хирĕç кĕрешнĕ пĕтĕм çулйĕре, халĕ тăрă шыв çине кăларнă тата çапса салатнă буржуалла националистсене, ПСК(б)П ретне шăвăнса кĕнĕскерсене хирĕç кĕрешсе нывине те пăхса тухсан, епĕр 35 çул кайала, РСДРП II-мĕш сйесĕнче, наци ыйтăвĕ тăрăх пулнă вăйлă тавлашусем питĕ пысăк историлĕ вырăн йышăннине куратпăр.

II-мĕш сйесăн тактикăлла резолюцийĕсем, уйрăмах есерсемпе либералсем çине мĕнле пăхас ыйту тăрăх тата çав ыйту тăрăх пулнă хирĕçÿсем вăл вăхăтрах тĕрлĕ класссен революцири ролне большевиксемпе меньшевиксем тĕппипех ăрасна хаклани палăрса тăнă.

Ленин есерсен партине вак буржуалла авантюристсем вырăнне хурса, либералла буржуазине çеç пулăшма пултаракан буржуалла демократин сулахай фракцийĕ вырăнне хурса хакланине II-мĕш сйес çирĕплетрĕ. Есерсем уйрăм çынсене хирĕç террор туни тата хăйсен буржуалла ăшчиккине пытарма революцилĕ пушă сăмахсем çаптарни, çавсем вăл партийĕ „пролетариатăн политикăлла атальнăвĕшĕн кăна мар, çăплах тата абсолютизма хирĕç пыракан пĕтĕм демократилĕ кĕрешÿшĕн те сийенлĕ" ²) тунă.

Либералсем çине мĕнле пăхас ыйту тăрăх ике резолюци панă пулнă. Плехановпа Ленинăн резолюцийĕ вырăс либерализмне класлă хакласа панă, либералсем патша правительстви умĕнче хырăмпа шуса çÿренине тăрă шыв çине кăларнă, Струве органĕ—„Освобождение" тавра пĕтĕçнĕ—Потресăвпа Мартăв резолюцийĕ либералсем умне вĕсемпе килĕшме чылай условисем кăларса тăратнă.

Потресăвпа Мартăв çырнă резолюци—оппортунисла, политикă тĕлĕшĕнчен шĕвек резолюци пулнă. Вăл резолюцийĕ Ленин çапла хак панă: вăл „вырăс либерализмĕн класлă содержанине палăртса памасть, вăл вырăс либерализмĕ палăрса тăракан палла политикăлла йухăмсене кăтартса памасть, вăл пролетариата унăн çав йухăмсем тĕлĕшĕпе пропагандă тата агитаци тăвас тĕп задачисем çинчен ăнлантарса памасть, вăл (хăй шĕвек пирки) студентсен йухăмне тата „Освобождение" не,—çавнашкал ăраснă йапаласене, пĕр çĕре пĕрлештерет" ³).

II-мĕш сйесра либералсем çине мĕнле пăхасси çинчен пулнă тавлашу—вăл буржуалла-демократилĕ революцинче пролетариатăн йертсе пырас ролĕ çинчен тавлашни пулнă. Çав тавлашу—1905—1907 çулсенчи революци тапхăрĕнче буржуази хыççăн кайнă тата 1917 çулта тĕппипех буржуазипе çыхăнса, пролетариата хирĕç тухнă меньшевиксемпе есерсене хирĕç малала кĕрешессине малтанах кăтартса панă. Çак историлĕ малашлăха асра тытса кăна ентĕ, либералсем çине мĕнле пăхас ыйту тăрăх ленинецсен тавлашăвĕн тарăн принциплăхне тата хĕрÿлĕхне ăнланса илме пулать.

Пурне те палла, пуриччен ытла хĕрÿлĕ тавлашусем парти уставĕ тавра сарăлса кайнă. Çав тавлашусем рабочи парти тăвас тата унăн пулас революцинчи ролне хаклас тĕлĕшпе пĕтĕмĕшпех ăраснă шухăшсем пулнине палăртни ун чухне нумайĕшне палла пулман. Пуриччен ытла çакна II-мĕш интернационалăн хĕвеланăç Йевропари партисен лидерĕсем ăнланман, меньшевиксем вĕсене Ленина расколник вырăнне хурса кăтартнă, вĕсен шучĕпе „вăтам çулйĕр" тупма май пур çĕртех вăл ытлашши хытă хирĕçет, тенĕ.

Ленин „Что делать?" йатлă кĕнекере кăларса тăратнă организацилĕ шухăшсене хĕрÿлĕн хÿтĕлерĕ. Сăмах, пролетариатăн малта пыракан, организацилĕ, революцилĕ отрйачĕ пулса тăракан партийĕ тăвасси çинчен пынă.

Меньшевиксем икĕ ăнланăва: „парти" тата „класс" ăнланусене йурийĕх пăтраштарнă, организаци членĕпе сочувствующи-стачечник, профессăр, гимназист хушшинчи чикке йури пĕтерсе хунă. Вĕсем вак буржуалла сердака „рабочи парти" тăвассишĕн тăрăшнă. Унашкал партире вара малта пыракан, революцилĕ рабочисем политикă тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ çитĕнеймен рабочисен тата оппортунисла шухăшла, „политикă тĕлĕшĕнчен сапаланчăк елементсен массинче путса çухалнă пулĕччĕç.

Парти уставĕн пирвайхи параграфĕ тĕлĕшпе Ленинăн тата Мартăвăн формулировкисенче пролетарилĕ централизмпа дисциплинă тата буржуалла анархисла индивидуализм тĕл пулнă. Çавах та „çемçе" искровецсем, „лачакарисем" тата искровецсене хирĕç пыракансем сасăланипе II-мĕш сйесра Мартăв формулировкине йышăннă. Вăл формулировкă тăрăх: сочувствовать тунипех, пулăшнипех, парторганизацине кĕмесĕрех парти членĕнче шутланса тăма пулнă. III-мĕш сйес кăна, 1905 çулта çуркунне пулнăскер, парти уставĕн пирвайхи параграфĕ тĕлĕшпе Ленин формулировкине йышăннă. IV-мĕш сйес, пĕрлешÿлĕ сйес тенĕскер, 1906 çулта çав решенине çирĕплетнĕ.

Ленин парти строительстви тĕлĕшпе тунă тĕп ĕçсене пахаласа, Сталин йулташ пролетарилле диктатурă тапхăрĕнче, „Ленин кам парти членĕ пулма пултарасси пирки кĕрешни пит пысăк, принципллă вырăн йышăннине палăртнă.

Историлĕ опыт кам парти членĕ пулма пултарассине большевикла

*) Йулашки. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунĕ" 172-мĕш номерĕнче.

¹) В. И. Ленин. Собр. соч. Т. V, стр. 381.

²) „ВКП(б) в резолюциях", ч. 1-я, стр. 26.

³) В. И. Ленин. Собр. соч. т. VI. стр. 260.

Умра тата хӗрӳлӗрех ӗҫ тӑрат

Кӑнтӑрти районсем—Патӑрйел, Шӑнкӑртам тата Йелчӗк районӗсем ыраш вырса пӗтерсе, ҫуртри вырма тухрӗҫ. Нумай колхозсем ыраша кӗске срукрах тата пысӑк пахалӑхпа вырчӗҫ. Стахановла йӗхӑма ӗҫре анлӑн сарса пыни ыраша анаҫлӑн пухса кӗртме май пачӗ. Пирӗн колхозсем виҫӗ республика ӑмӑртӑвӗнче малти рете тухассишӗн ӗҫлеҫҫӗ. Колхозниксемпе колхозницӑсем ӗҫӗн пысӑк тухӑҫлӑхне кӑтартса пычӗҫ. Уравӑш йалсоветне (Вӑрнар р.) кӗрекен „Колхозницӑ" колхоз планпа пӑхнинчен икӗ кун маларах ыраш вырса пӗтерчӗ. Кунта звеносем пӗр-перинпе ӑмӑртса ӗҫлени—ӗҫе татса панӑ. Жнейкӑсемпе туллин ӗҫленӗ. Пӗрремӗш бригадӑри машиновед П Алексейӗв кулленхи ӗҫ нормине 160 процент тултарса пычӗ. И. Козлова, А. Гераҫимӑвӑ, Васильйӗвӑ колхозницӑсем жнейкӑпа вырнӑ хыҫҫӑн 600—700 келте ҫыхса пычӗҫ. Хаљ „Колхозницӑ" колхозра ҫуртри вырӑҫҫӗ, ыраш кӗлтисене шапана хываҫҫӗ.

Йамбахтинӑри (Вӑрнар р.) „Партизан" колхозра та стахановецсен йышӗ чылайах ӳсрӗ. М. Христофорӑвӑ, Е. Смирновӑ, М. Попова, Константинӑвӑ, Т. Петровӑ, С. Архипӑвӑ колхозницӑсем алпа вырмали нормӑна 250 процентран пуҫласа 344 процента ҫитиччен тултарса пычӗҫ. Жнейкӑсемпе ӗҫлекенсем те нормӑна икӗ хут ытларах тултарса пынӑ.

Йелчӗк районӗнчи Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозра ыраша пӗтӗмпех жнейкӑсемпе вырса пӗтерчӗҫ. Колхозра стахановла ӗҫлес йӗхӑма сарса пынипе жнейкӑсемпе вырнӑ ыраша ҫийӗнчех ҫыхса пыма ӗлкӗрчӗҫ. Колхозницӑсем чӑннӑнах ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ. Нормӑ тӑрӑх 400 келте ҫыхса пымала пулнӑ пулсан, М. Волкӑвӑ, И. Ивановӑ йулташсем кунне 1000—1200 кӗлте таран ҫыхса пычӗҫ.

Шаккӑлти (Канаш р.) „Искра" колхозра ватӑ колхозниксем ҫамраксенчен ӗҫре пӗртте йулмаҫҫӗ. Вӗсем ҫамраксемпе ӑмӑртса, аванҫа ӗҫлеҫҫӗ. М. Шемшерӑвӑ, 72 ҫула ҫитнӗскер, ҫурлапа вырмали нормӑна 150 процент тултарат. Й. Кошкинӑ, Й. Григорйӗвӑ колхозницӑсем те Шемшерӑвӑран йулмаҫҫӗ.

Уйрӑм комбайнӗрсем пысӑк тухӑҫ кӑтартаҫҫӗ. Йелчӗк МТС-чи комбайнӗр Кужманав хӑйӗн комбайнпа ыраш пухса кӗрес планне 5 кун хушшинче тултарчӗ. Ийулӗн 23-мӗшӗнче Кушманӑв комбайнӗр 30 гектар ыраш пухса кӗртнӗ. Ҫав кун вӑл 103 тенкӗлӗх ӗҫленӗ. Анчах ҫакӑн пек тӗслӗхсем сахалтарах-ха. Стахановецсен паха опычӗсене ытти комбайнӗрсем хушшине куҫарса пымала.

Ыраш вырса пӗтерни ӗҫӗн пуҫламӑшӗ кӑна. Пирӗн умра тата ответлӑ ӗҫсем тӑраҫҫӗ: ҫуртри вырасси, авӑн ҫапасси, государствӑна тырӑ тӑратасси. Ҫак ӗҫсене вӑхӑтра тата пысӑк пахалӑхпа вӗҫлессишӗн кашни колхозра, МТС-че тата бригадӑсемпе звеносенче стахановла йӗхӑма анлӑн сарса пымала. Лайӑх опытсене ытти колхозсене, МТС-сене куҫарса пырас пулат.

Чи лайӑх тырра—государствӑна

ВӐРНАР. Районра ийулӗн 27-штӗлне 20 колхоз ыраш вырса пӗтерчӗҫ. 7 колхоз кӗрхи тулӑ вырма тытӑнчӗҫ. Ыраш вырнӑ ҫерте колхозниксем хушшинче социалисӑмла ӑмӑртупа стахановла йӗхӑма анлӑн сарса йанипе Кольцовкӑри Сталин йачӗпе, Зеленовкӑри Ленин, Булатӑвӑри Молӑтав, Мамалайри Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозсем тата Хирпуҫӗнчи „Колхозницӑ" колхоз ыраша план тӑрӑх пӑхнӑ срукран пӗрер кун маларах вырса пӗтерчӗҫ.

Халӗ районра чылай колхозсем авӑн ҫапса государствӑна тырӑ пама тытӑнчӗҫ. Чи малтан ийулӗн 26-мӗшӗнче Какшӑмри „Ӗҫ йалавӗ" колхоз государствӑна 13 центнӗр тырӑ пачӗ. Ийулӗн 27-мӗшӗнче Зеленовкӑ, Хирпуҫ колхозӗсем государствӑна тырӑ леҫрӗҫ.

Ник. Козлов.

Ӑмӑрту ӗҫе татса парат

ТӐРӐМ (Йелчӗк р.) йалсоветне кӗрекен Дзержинский йачӗпе тӑракан тата „Вперед" колхозсем тырпулсене кӑтартулӑн пухса кӗрес, государствӑна паха тырӑ тӑратас тӗлӗшпе ӑмӑртса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫак колхозсем ыраш вырма лайӑх хатӗрленсе тухрӗҫ. Уйра ӗҫе тӗрӗс организацилене май тата стахановла йӗхӑма тивӗҫлипе сарса пынипе колхозниксемпе колхозницӑсем малтанхи кунах ӗҫ нормине ытлашшипех тултарса ӗҫleme тытӑнчӗҫ. „Вперед" колхозри пӗрремӗш бригадӑри Г. Игнатйӗв колхозник жнейкӑпа 6 гектар вырас вырӑнне 10 шар гектар, иккӗмӗш бригадара—И Филимонӑв тата М. Гаврилӑв машиноведсем 9,6-шар гектар, виҫҫӗмӗш бригадара—В Трофимӑв, С. Чистов йулташсем 9-шар гектар вырса пычӗҫ.

Кӗлте ҫыхакансем хушшинче те ӑмӑртса ӗҫлесси сарӑлса пычӗ. Скворцов йертсе пыракан звенора 15 ҫын. Ҫак звенори колхозницӑсем 900—950-шар кӗлте ҫыхаҫҫӗ.

„Вперед" колхоз ыраша 5 кунта вырса пӗтерме пӑхнӑ пулсан, 4 кун хушшинче вырса пӗтерчӗ.

Дзержинский йачӗпе тӑракан колхоз та кайа йулмарӗ. Планпа пӑхнинчен 2 кун маларах ыраш вырса пӗтернӗ. А. Кривов тата Д Кириллӑв колхозниксем сменӑра 11-шер гектар вырса пычӗҫ. Т. Васильйӗв 850 кӗлте, М Прокопйӗва 800 кӗлте ҫыхса пыраҫҫӗ.

Хаљ ӑмӑртса ӗҫлекен колхозсенче авӑн ҫапаҫҫӗ, ҫуртри выраҫҫе, государствӑна тырӑ леҫсе тӑраҫҫӗ.

Тӑрӑм йалсовет председателӗ
А. Баймушкин.

„Исаково" колхоз мала тухрӗ

ТРАК, ийулӗн 27-мӗшӗ. (Телефон тӑрӑх). „Исаково" колхоз Тахӑр-Такари „Хӗрлӗ ҫӑлтӑр" колхозпа ӑмӑртса ӗҫлет. Ӗҫре „Исаково" колхоз хӑйпе ӑмӑртакан „Хӗрлӗ ҫӑлтӑр" колхозран мала тухса пыни, тырпула пуҫтарса кӗртме хатӗрленнӗ вӑхӑтрах палӑрчӗ. Тырӑ вырма тухсан „Исаково" колхозра кашни бригадӑ пӗр-перинпе ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ, йалти агитатӑрсем, хаҫат вуласа паракансем: П. Андрейӗв, М. Терентйӗв, П. Константинӑв йулташсем колхозниксем хушшинче агитацилӗ-массӑлӑ ӗҫе куллен туса пычӗҫ. Тырӑ вырнӑ чухне колхозниксене ваљљи кашни кунах вӗретнӗ шыв илсе тухнӑ. Тырӑ вырнӑ чухне 4-мӗш бригадӑ (бригадирӗ А. Андрейӗв) мала тухрӗ. Колхоз ийулӗн 27-мӗшӗнче ыраш вырса пӗтернӗ пулсан, Андрейӗв бригади ыттисенчен малтан пӗтерчӗ, унӑн ӗҫ пахалӑхӗ те малта тӑрат. Кӑсалхи уйӑхра ӗҫӗнче Н. Йегорӑвӑ, Е. Ҫтепанӑв, 60 ҫулхи Е. Николайӗва йулташсене палӑртмала. Вӗсем ӗҫ дисциплинин тата ӗҫе йӗркелес тӗлӗшпе ыттисенчен уйрӑмах палӑрса тӑчӗҫ.

Халӗ колхоз государствӑна тырӑ пама тытӑнчӗ. Пайанхи куна икӗ хутчен леҫсе пачӗҫ. Ҫав вӑхӑтрах „Хӗрлӗ ҫӑлтӑр" колхоз ыраш вырса пӗтермен, государствӑна тырӑ парас ӗҫе те пуҫӑнман.

И. Михайлӑв.

Ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса пымала

„Бригадир ернерен сайра мар ертелӗн кашни членӗ ваљљи вӑл тунӑ ӗҫсене шутласа парат, йышаннӑ ӗҫ хакӗсем тӑрӑх миҫе ӗҫкунӗ тунине колхозникӑн ӗҫкенекине ҫырса парат.

Ертел правленийӗ кашни уйӑхра ертел членесем иртнӗ уйӑхра мӗн чухлӗ ӗҫкунӗ тунине кӑтартакан спискӑ кӑларса ҫакат",—ҫапла калать йалхуҫалӑх ертелӗн сталинла уставӗн 15-мӗш статйи ҫинче.

Йалхуҫалӑх ертелӗн уставӗ кашни колхозникшӑн, чи малтанах колхоз правленийӗнче ӗҫлекенсемпе бригадирсемшӗн колхоз пурнӑҫӗнче никам пӑсайми саккун пулса тӑрат. Устава лайӑх пурнӑҫласа пыракан колхозсенче колхоз ӗҫӗ те йӗркелӗ пырат, ӗҫкунӗсене вахӑтра тата пурне те ҫырса пынине кура колхоз членӗсем те тӑрашса ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах та, йалхуҫалӑх ертел уставне тӗрӗс пурнӑҫа кертсе пыман колхозсем хаљ те пур-ха. Чылай ҫерте чи малтанах ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса пырас тӗлӗшпе устава пӑсса ӗҫлени палӑрат.

Йалкор Одинцов йулташ пӗлтернӗ тӑрӑх, Май-Сӗнтӗр йалсоветне кӗрекен (Тутаркас р.) „Трудовик" колхозра май уйӑхӗнче ӗҫленисене хаљ те нариад ҫырса йӗркелеймен. Ийуњ уйӑхӗнче ӗҫленисене ийулӗн 20-мӗшӗнче ҫеҫ списӑк туса кӑтартнӑ. Анчах та, ҫав списока курсан колхозниксен чылайӗшӗн кӳренмеле пулнӑ, ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса пыман пирки чылайӗшӗн ӗҫленисем палӑрмасӑр йулнӑ.

Колхоз председателӗ айӑпа счетоводпа бригадир ҫине йарат, счетовод бригадир ҫине, бригадир—счетовод ҫине. Устав тӑрӑх куншӑн, ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса пыманшӑн, чи малтанах бригадир айӑплӑ, ҫав вӑхатрах колхоз правленийӗ те ответлӑ. Ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса пынине колхоз правленийӗн бригадирсене йалан тӗрӗслесе тӑмала.

Ҫавӑн пекех, Тивӗшри (Ишлей р.) „Тивӗш" колхозри 2-мӗшпе 3-мӗш бригадӑсенче те ӗҫкунӗсене вӑхӑтра ҫырса пымаҫҫӗ. Ҫумҫумланисене, утӑ ҫулнине хаљ те ӗҫкенекисем ҫине ҫырса паман. Бригадирсем ҫапла калаҫҫӗ: „Йерҫӳ ҫук, сирӗн ӗҫкунӗсем пурпӗрех ҫухалмаҫҫӗ, епӗр хамӑр блокнотсем ҫине ҫырса пыратпӑр",—теҫҫӗ, тесе пӗлтерет О. Артемйӗв йалкор.

Блокнот ҫине ҫырни те тӗрӗс мар. Ӗҫкунӗсене кашни ернере ӗҫкӗнекисем ҫине ҫырса памала. Хаљ хӗрӳлӗ ӗҫ вӑхӑтӗнче—тырпулсене пухса кӗртнӗ вӑхӑтра ӗҫкунесене вӑхӑтра ҫырса пыни пушшех пит кирлӗ ӗҫ пулса тӑрат. Колхоз правленийӗсен ҫеҫ мар, ҫӗрӗҫ пайӗнчен, МТСтанцинчен тата районри ытти организацисенчен колхоза пыракенсен те колхозсенче ӗҫкунӗсене вахӑтра ҫырса пынине йалан тӗрӗслесе тӑмала. Колхозник тунӑ ӗҫкунӗ пӗр кун та ҫухалмала мар.

Жнейкӑсемпе уса курмаҫҫӗ

Йетӗрне, ийулӗн 27-мӗшӗ. (Телефон тӑрӑх) Районри 90 колхозран 31 колхоз кӗрхи тырӑсене вырса пӗтерчӗҫ Чылай колхозсенче халӗ ҫуртри вырӑҫҫе Хӑшпӗр колхозсем кӗрхи тырӑсене ҫуррине те вырман. Ирҫери „Сура" колхозӑн виҫӗ жнейкаран пӗри те йусавла мар. Тырра алӑпа ҫеҫ вырнипе кайа йулнӑ. Чурпайри Кирӑв йачӗпе тӑракан колхозӑн тырри тӑкӑнма пуҫланӑ. Ҫав вӑхӑтрах виҫӗ жнейкӑ ӗҫлемесӗр лараҫҫӗ.

Н. Ц.

Ҫилос хывассишӗн тӑрӑшмаҫҫӗ

Хаљ—ҫилос хывмали чи лайӑх вӑхӑт. Ҫилос хывмали плана тултарма тӗрлӗрен куӑксем тӗмӗн чухлех. Анчах, Шурчакассинчи (Шупашкар р.) Каганович йачӗпе тӑракан колхозра ҫилос хывас тӗлӗшпе пачах ӗҫлемеҫҫӗ.

— Кӗркуннесӗр ҫилос хывайманӑр, сулӑ хатӗрлеме задани паман пире,—тесе ответлет колхоз председателӗ. Ҫилоса кӗркунне ҫеҫ хывмала,—тенӗ шухӑша пӗтерес пулат Ҫилоса хаљ хывса хаварма тӑрӑшмала Кувпа пӗрлех сулӑ хатӗрлессишӗн тӑрӑшса ӗҫлемеле.

Монҫейӗв.

Чукунҫул строителстви

Стахановла йӗхӑм ҫине ҫӑмӑллӑн пӑхаҫҫӗ

КАНАШ (Хамӑр корр.). ПСК(б) Парти Тепкомӗн 1937 ҫулти декабер уйӑхӗнче „Мускавпа Мускав облаҫӗнчи хапрӑксемпе саватсенчи стахановецсем чӗнсе калани" пирки йышӑннӑ постановленийӗ стахановла йӗхӑма йертсе пырас тӗлӗшпе йанашсенчен хыттӑн ҫыхлантарса, ӑна ҫеклесе пымали тӗрӗс ҫул кӑтартса пачӗ.

Ҫакна чукунҫул строителствинчи руководителсем, ҫаплах стройкари партипе профсойуз организацисем те шута илмен. Ун ҫинчен хаљхи вӑхӑтра пыракан „Стахановла рекордсен пилӗккунлах" ӗҫсем те аван кӑтартса параҫҫӗ. Чукунҫул ҫинче ӗҫлекенсен Пӗтӗм Союзри кунне ҫитенӳсемпе кӗтсе илес шутпа пуйӑссем ҫӳретекен участкӑ (контора движении) начаљникӗ Родионӑв, виҫҫӗмӗш участкӑ начаљнике Голубев йулташсем „Стахановла рекордсен пилӗккунлахе" иртерме шут тытнӑ. Ийулӗн 23-мӗшӗнче ку ытупа ҫӳлте асӑннӑ икӗ участкӑри работниксен канашлӑвӗ пухӑнчӗ.

Мен курӗнчӗ-ха вӑл канашлура? Участкӑсем пилӗккунлӑха иртерме хатӗр пулман. Пилӗккунлӑха ҫеҫ мар, канашлӑва иртерме те тивӗҫлипе хатӗрленмен. Родионӑв йулташ шутласа хунӑ план тӑрӑх, канашлура пилӗккунлӑх задачесем ҫинчен сӳтсе йавмала. Вӑл канашлӑва строителства управлени начаљникӗ Вавилкин, партком секретарӗ Никитин йулташсен тата постройком председателӗн те пымала пулнӑ. Вӗсене чӗннӗ. Анчах вӗсем пӗри те пыман. Виҫҫӗмӗш участкӑри работниксем те пӗр сехет ытла кайа йулса пычӗҫ. Ҫавна пула канашлу ним йӗркесӗр иртрӗ. Канашлӑва пынӑ икӗ участкӑри работниксем начар ӗҫленине пӗр-перин ҫине йавантарнисӗр пуҫне, урӑх нимӗнле кирлӗ ыйтусене те сӳтсе йавмарӗҫ.

Канашлура пилӗккунлӑх задачисем ҫинчен тӗплӗн сӳтсе йавман пулин те, Родионӑвпа Голубев йулташсем хӑйсен шухӑшӗсенчен паранмарӗҫ. Вӗсем ийулӗн 25-мӗшӗнчен пуҫласа „Стахановла рекордсен пилӗккунлӑхне" иртермеле тунӑ. Ҫапла ийулӗн 25-мӗшӗнчен „Стахановла рекордсен пилӗккунлӑхе" пуҫланчӗ. Мӗн курӑнчӗ-ха пилӗккунлӑхан малтанхи кунӗнче? Тӳрех калас пулат, вӑл кун строителствӑра мӗн чухлӗ те пулин палармалах ӗҫсем тӑвайман. Тӗрессипех каласан, малтанхи кунсенчен те начар ӗҫлене. Ӗкскаватар 4 сехет хушши ӗҫлемесӗр ларнӑ. Ҫавӑн пирки пӗр паравус 2 сехет хушши тӑнӑ. 523-мӗш номерлӗ паравус составӗсем иртессине кӗтсе 4 сехет тӑнӑ. Пӗр вакуна лини ҫинчен тӳнтерсе йанӑ. Ҫаксене пула ӗҫ графикне пӗтӗмпех пасна.

Ку ӗнтӗ чукунҫул строителствинчи работниксем уйрӑм рекордсем тӑвассипе кӑсӑхса кайса, стахановецсемпе ударниксен пӗтӗм массине йертсе пырас, стахановла йӗхӑма массӑлла йӗхӑм тӑвассишӗн большевикла тимлехпе ӗҫлессине манса хаварни ҫинчен калат. Кун ҫинчен строителства руководителӗсем пӗлмеҫҫӗ темӗле мар, вӗсем ӑна лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ. Анчах йанӑшсене вӑхӑтра тӳрлетессишӗн тӑрашмаҫҫӗ.

М. Титов.

Илнӗ обйазателства пурнӑҫа кӗрет

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул строителствинче комсомолец Максимӑв йулташ йертсе пыракан бригадӑри рабочисем (бригадӑра 18 ҫын) Пӗтӗм Союзри чукунҫул транспортӗнче ӗҫлекенсен кунне тата Ленинла—Сталинла комсомол 20 ҫул тултарнине ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илес тӗлӗшпе кашни кун плана 150 процентран кайа мар тултарса ӗҫлеме пулнӑччӗ.

Комсомолецсем илнӗ обйазателствӑна анаҫлӑн тултарса пыраҫҫӗ. Йулашки кунсенче плана 140—160 процентшар тултарчӗҫ. 12 стахановец йалан 150—170 процентшар тултарса ӗҫлеҫҫӗ.

Парӗн сигналсем тӑрӑх

„Мухтав йурӑрине йурлакансем" пирки

„Чӑваш Коммунӗ" хаҫатӑн ийунӗн 22-мӗшӗнче тата ийулӗн 16-мӗшӗнче Хӗрлӗ Чутай районӗнчи „Ҫӗнтерӳ ҫулӗ" хаҫат парти райкомӗн ӗҫне мухтас ҫул ҫине тӑнӑ, партипе совет организацисен ӗҫри ҫитменлӗхӗсене большевикла критиклемест, тесе ҫырнӑччӗ.

Парти райкомӗн ийулӗн 23-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗнче „Чӑваш Коммунӗ" Хӗрлӗ Чутай районӗнчи „Ҫӗнтерӳ ҫулӗ" хаҫатӑн йанӑшӗсене кӑтартса панисене тӗрӗс, тесе йышӑннӑ. Парти райкомӗ хӑйӗн постановленийӗнче „Ҫӗнтерӳ ҫулӗ" хаҫат ответлӑ редакторӗ Павлӑв йулташпа редактӑр заместителӗ Иванов йулташ райкомпа райӗҫтӑвком ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене критиклес вырӑнне, вӗсене витсе лартас ҫул ҫине тӑнине палӑртат.

Ҫавӑн пекех райком хаҫатра критикӑпа самокритикӑна ҫитерӗксӗр сарса пынине, хаҫат массӑпа ҫыхӑнӑву тытнине палӑртса, редакцине ҫак ҫитменлӗхсене пӗтерме хушса хӑварнӑ.

Парти райкомӗ, уйрӑмах унӑн секретарӗсем, редакци ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене пӗтерме вӑхӑтра кӑтарту паманнине палӑртнӑ.

Парти райкомӗн ларӑвӗнче, райони коммунисчен черетлӗ пухӑвӗнче редакци отчотне итлеме палӑртнӑ. Редакцине массӑпа тачӑ ҫыхӑну тытса, автӑрсен коллективне ҫирӗплетме, парторганизацисен ӗҫӗсене тӗплӗн ҫутатма хушнӑ, райком инструктӑрӗсен, коммунистсен райони хаҫат ҫине активлӑн ҫырса тӑмала, тенӗ райком решенийӗнче.

ӑнлании мӗн пек пысӑк вырӑн йышӑннине кӑтартса пачӗ. Ҫакнашкал ӑнлавӑва тӗпе хунипе вунӑшар ҫул хушши большевиксен питех те чаплӑ организацийӗ чӑмӑртаннӑ. Ҫак организаци ӗнтӗ патша йӗркине ҫӗмӗрсе тӑкас, буржуази влаҫне ҫӗмӗрсе тӑкас тата тӗнчере пӗрремӗш социалисӑмлӑ государствӑ тӑвас аслӑ та исорилӗ задачӑсене пурнӑҫа кӗртрӗ. Ҫакна тӗпе хунипе большевикла дисциплинӑ пулса ҫирӗпленнӗ, ку дисциплинӑ йышӗ пысӑк мар организацине пӗрлӗхлӗ хаватлӑ революцилӗ вӑй тума пулӑшрӗ.

II-мӗш сйесӑн пит паха ӗҫӗ оппортунисcенчен уйӑрӑласси пулнӑ. „Нумайрах пайа тата сахалрах пайа уйӑрӑлса кайни,—тесе ҫырнӑ раскол пирки Ленин,—вӑл социал-демократи революцилӗ пайа тата оппортунисла пайа—Горапа Жирондӑна уйӑрӑлса кайни тӳррӗнех, пурперех малала пулсӑ пыни пулат,—ҫак вӑл ӗнер кӑна мар пулӑннӑ тата пӗр вырӑс рабочи партинче кӑна мар пулнӑ, ҫакӑ, тен ыран та пӗтес ҫук-ха"[11]).

Партин центрти учрежденийӗсене суйланӑ чухне сйесра вӑй шайланса тӑни ҫапла пулнӑ, ленинецсен йенчен сасӑсем нумайрах пулнӑ, мӗншӗн тесен ку вӑхӑт тӗлне сйесран „рабочеделецсем" тата бундовецсем тухса кайнӑ. Ҫавӑнтан вара „большевиксем" тата „меньшевиксем" текен йатсем пулса кайнӑ.

Ҫапла вара, ҫийелтен пӑхсан раскол партин центрти учрежденийӗсен составӗ пирки пулса кайнӑ пек курӑнат, чӑннипе раскол ҫак ыйту тӑрӑх пулнӑ: пирен чӑнчӑн пролетарилӗ, рабочи класӑн кӗрешӗвне йертсе пыма пултаракан тата пролетариата революцилӗ йӗхӑмӑн пуҫне тӑратма пултаракан парти пулат-и йе унашкал парти пулмасӗ,—вара Российӑри рабочи клас хӑйӗн пӗтӗм тӗнчипе историлӗ задачисене пурнӑҫа кӳртме пултараймас ҫук.

II-мӗш интернационалри оппортунистсем II-мӗш сйесра пулса кайнӑ раскол пирки пысӑк шав пуҫласа йанӑ. Вӗсем тӳррӗнех Ленина айӑпланӑ. Ҫирӗп мар, партилӗ мар елементсем раскол пулнӑшӑн „никампа килӗшмен" Ленина тата чул пек ҫирӗп большевиксене айӑпласа нӑйкӑшнӑ вӑхатра, Ленин ҫапла ҫырнӑ:

> „Йепле питех те чаплӑ йапала—пирӗн сйес!.. Уҫа, ирӗклӗ кӗрешӳ. Шухӑшсене каласа панӑ. Уйрӑм йенсем палӑрса ҫитрӗҫ. Ушкӑнсем палӑрчӗҫ. Алӑсене ҫӗкленӗ. Решени йышӑннӑ. Пӗр тапхӑр витӗр тухнӑ. Малала!"[12]).

Питех те паллӑ, оппортунистсемпе таталса каймасӑр, вӗсемпе татӑлӑнах уйӑрӑлса каймасӑр, расколсӑр хаљхи вӑхатра социалисӑм ҫӗнтерни пӗтӗм тӗнчери пирвайхи ҫӗршывӑн пуҫӗнче тӑракан большевиксен питех те чаплӑ организацийӗ пулса кӑйаймалан пулеччӗ, Коммунисла Интернационалӑн малта пыракан отрйачӗ—Ленин—Сталин партийӗ пулман пулӗччӗ. Ҫак оппортунистсемпе уйӑрӑлнин пахалӑхӗ ҫинчен Сталин йулташ партин XV сйесӗнче йулашкинчен калана сӑмахӗнче ҫапла асӑнтарса каланӑ:

> „Илер 1903 ҫула, пирӗн партин II-мӗш сйесӗ тапхӑрне. Ҫав тапхӑр вӑл парти либералсемпе килӗшӳ тытассинчен либераллӑ буржуазийӗ хирӗҫ вилӗмлӗ кӗрешессипатне ҫаврӑннӑ, патша йӗркине хирӗҫ кӗрешме хатӗрленессинчен ӑна хирӗҫ уҫҫӑн—патша йӗркине тата феодализма пӗтӗмпех аркатса тӑкма—кӗрешме тытӑннӑ тапхӑр пулнӑ. Парти пуҫӗнче вӑл вӑхӑтра ултӑ ҫын тӑнӑ: Плеханӑв, Засулич, Мартӑв, Ленин, Акселърод, Потресӑв. Ҫаврӑну ҫав ултӑ ҫынран пиллӗкӗшин пуҫне ҫинӗ. Вӗсем урапа ҫинчен тухса ӳкнӗ. Ленин пӗрпӗччӗнех йулнӑ. Ҫапла пулса тӑнӑ—партин ватӑ лидерӗсем, партийе пуҫарса йаракансем (Плеханӑв, Засулич, Акселърод) тата икӗ ҫамрӑк (Мартӑв, Потресӑв), ҫавсем пурте пӗр ҫынна хирӗҫ, ҫавӑн пекех ҫамрӑк ҫынна хирӗҫ—Ленина хирӗҫ тӑнӑ. Унчухнехи вӑхӑтра: парти пӗтет, парти тытанса тӑраймасӗ, ватӑ лидӗрсемсӗр нимӗн те тухмасӗ, тесе нӑйкӑшни, йӗрни тата уласах макӑрни мӗн чухлӗ пулнине сирӗн пӗлесчӗ Анчах нӑйкӑшнисемпе жалӑбӑсем ытӑнса кайнӑ, фактсем йулнӑ. Фактсем ҫакӑн пек пулнӑ—шӑпах ҫав пилӗк ҫын парӑнса кайнипе пула парти ҫине тухма пултарнӑ Халӗ вӗтӗ кашни большевик ҫакна уҫҫӑн пӗлсе тӑрат: Ленин ҫав пилӗк ҫынна хирӗҫ татӑклӑн кӗрешмен пулсан, ҫав пилӗк ҫынна сирсе пӑрахман пулсан пирӗн парти пӗтӗҫсе большевиксен партийӗ, пролетарисене буржуазийӗ хирӗҫ революцийе йертсе пыма пултаракан парти пулаймен пулнӑ пулӗччӗ"[13]).

II-мӗш сйес большевикла парти, ҫӗнӗ типлӑ парти пурнӑҫӗн никӗсне хунӑ. „Малтан,—тесе ҫырнӑ Ленин,—пирӗн парти формаљнӑ организаципеле пӗтӗмӗшлӗ пулман, уйрӑм ушкӑнсем пӗрлешӳнни ҫеҫ пулнӑ, ҫавӑнпа та ҫав ушкӑнсем хушшинче идейӑ тӗлӗшпе пӗрне-пӗри иртерме тӑрашнисӗр пуҫне урӑхла ҫыхӑнусем пулма та пултараймӑн. Халӗ епӗр организацилӗ парти пулса тӑтӑмӑр". Ҫав тапхӑрти пуҫласа большевиксен партийӗ, ҫийелтен пӑхсан тата темиҫе ҫулччен РСДРП-н пӗтӗмӗшле йалавӗ айӗнче йулнӑ пулсан та, никама пӑхӑнман вӑй пулса тӑнӑ.

Кайарах парти пурнӑҫӗнче меньшевиксем хыҫҫӑн кайакан рабочисемпе пӗрлӗх фрончӗ тума тытӑннӑ вӑхӑтсем те пулнӑ. Ҫакна тӑвассишӗн парти меншевикла организацисемпе вӑхӑтлӑха пӗрлешме те килӗшнӗ, сӑмахран, РСДРП IV-мӗш Пӗрлештерекен сйесӗнче ҫапла пулнӑ.

Ҫавах та II-мӗш сйесран, 1903 ҫултан пуҫласа, революцилӗ марксисӑм йенче, Ленин йенче тӑракансем пӗтӗм тӗнчери рабочи йухӑмра никама пӑхӑнса тӑман парти—большевиксен партийӗ—пулса тӑнӑ. Чӑнах та большевиксем ҫак уйӑрӑлӑва татӑклӑнах 1912 ҫулта кӑна, VI-мӗш Прагӑра пулнӑ пӗтӗм партилӗ конференцинче йӗркелесе ҫитерӗҫ. Большевиксем хӑйсен паллӑ организацилӗ ҫулйерне хӳтеленӗ. Большевиксем хӑйсен большевикла тактикине туса хатӗрленӗ, малтан ӑна партин II-мӗш сйесӗнче йӗркеленӗ, унтан ӑна партин III-мӗш сйесӗнче, 1905 ҫулта тата та тӗплӗрех палӑртнӑ.

II-мӗш сйесри раскол питӗ пысӑк, пӗтӗм тӗнчипе паллӑ вырӑн йышӑннӑ. Меншевиксен оппортунисла позицине II-мӗш интернационалӑн лидерӗсем хӳтеленӗ. Партине тата партилӗхе хӳтелесе Ленин, большевиксем, Российӑри оппортунисӑма хирӗҫ те, пӗтӗм тӗнчери оппортунисӑма хирӗҫ те кӗрешсе пынӑ.

II-мӗш сйесра программӑлла, тактикӑлла тата организацилле тӗп ыйтусем тӑрӑх, ҫапла, сӑмахран, пролетариат пуҫ пулса тӑрасси ҫинчен, пролетариат диктатури ҫинчен, хресченсен революцири ролӗ ҫинчен, либераллӑ буржуази ҫине мӗнле пӑхасси ҫинчен, парти уставӗн пирвайхи параграфӗ ҫинчен пулса иртнӗ кӗрешӳ—сйес хыҫҫӑн йаланах ленинисӑм йенче тӑракансемпе марксисӑма меншевикла пӑсакан оппортунистсем хушшинче сарӑлса кайнӑ кӗрешӗве ӑнлантарса парат. Ку кӗрешӳ сйес хыҫҫӑн тата та вӑйлӑланнӑ, большевиксемпе меншевиксем хушшинчи хирӗҫӳ ҫивӗчленнӗ, вӑл тата питех те паллӑн пулса пынӑ.

Большевиксем ҫӗнӗ типлӑ партишӗн сйес хыҫҫӑн кӗрешни, II-мӗш сйесра Российӑри социал-демократире пулнӑ раскол пӗтӗм тӗнчери рабочи йухӑмра оппортунисӑмпа раскол тумали ҫул пулса тӑнине пӗлтерет.

Ленинӑн партин II-мӗш сйес умӗнхи, сйесри тата сйес хыҫҫӑнхи тапхӑрти кӗрешӗвӗ—революцилӗ марксисӑмран кирек мӗнле уйӑрӑлса кайнисене хирӗҫ тӑрӑн принциплӑ, никампа килӗшми идейлӑ кӗрешӗвӗн тӗслӗхӗ пулса тӑрат.

Ҫакӑн ҫинчен Сталин йулташ ҫапла ҫырнӑ:

> „Ун чухне партин большевикла пайӗ мӗнпе ҫийеле тухрӗ, мӗнпе вӑл партин нумайӗш пайне хӑйне майлӑ ҫавӑрчӗ? Вӑл принципла хирӗҫӳсене хупласа вытармаиннипе тата меншевиксене хупӑрласа ҫитерипе ҫак хирӗҫӳсене ҫӗнтерессишӗн кӗрешнипе"[14]).

РСДРП II-мӗш сйесӗ пулнӑранпа вӑтӑр пилӗк ҫул иртрӗ. Виҫӗ революцинче, унтан пролетарилӗ революци пулнӑ хыҫҫӑн 20-ҫул хушши большевисӑмӑн принципӗсем чи тӑранан тата пур йенпе те тӗрӗсленчӗҫ. Ленинӑн—Сталинӑн вӗрентӗвӗ,—революцилӗ марксисӑмӑн гранитлӑ никӗсӗ ҫинче пулса ҫитнӗ малта пыракан рабочи класӑн отрйачӗ, пролетариатӑн тӗп организацийӗ пулса тӑракан парти ҫинчен вӗрентни; пӗтӗм тӗнчери мӗлйуншар малта пыракан рабочисен вӗрентӗвӗ пулса тӑчӗ.

Ленин тата Сталин тунӑ большевиксен организацийӗ III-мӗш Коммунисла Интернационалӑн мӗн пур партийӗсемшӗн тӗслӗх пулса тӑчӗ. Ленина хирӗҫ кӗрешекенсем: меньшевиксем, троцкистсем тата бухаринла-рыковла вутӑнчӑксем—фашистсен агенчӗсем, созузникӗсем тата фашистсен ӗҫне туса пыракансем пулса тӑчӗҫ. Троцкисла бухаринла тата ытти фашисла шпионсем, диверсантсем тата сӑтӑрҫӑсем етемлӗхӗн чи хайар тӑшманӗсем пулса тӑраҫҫӗ.

Большевисӑмӑн организацилӗ принципӗсем, тактики тата стратегийӗ пирӗн ҫӗршывра кӑна мар ҫӗнтерчӗҫ. Вӗсем пролетариатӑн пӗтӗм тӗнчери революцилӗ йухӑмӗнче пысӑкран та пысӑк вырӑн йышӑнса пыраҫҫӗ.

Ытти ҫӗршывсенчи рабочи класӑн чи пысӑк йӑвӑрлӑхӗсем ҫакӑнта пулнӑ: унӑн хӑйӗн кӗрешӳри чи татӑклӑ тапхӑрӗсенче большевикла парти пулман, тата вӑл питех те сахал те хайар ҫапӑҫусемпе сухатуринче кӑна большевизаци чи кирлӗлӗхӗ пулнине ӑнланса илсе пырат. Анчах ҫакна вӑл чылай патшалӑхсенче: Францире, Испанире, Китайра ӑнланса илнӗ ӗнтӗ. Ҫакна вӑл пур ҫӗрте те ӑнланса илӗ, мӗншӗн тесен большевисӑм, Ленин—Сталин вӗрентӗвӗ, пӗртен-пӗр тӗрӗс революцилӗ теорипе тактикӑ пулса тӑрат, ҫак революцилӗ теорипе тактикӑ ҫӗр чӑмӑрӗн улттӑмӗш пайӗнче татакла тата йалаллӑха социалисӑм ҫӗнтерессине ӗҫе кӗртрӗҫ тата вӗсем пӗтӗм тӗнчипе социалисӑмлӑ революци ҫӗнтерессине ӗҫе кӗртӗҫ.

Марксӑн—Енгелсӑн—Ленинӑн—Сталинӑн аслӑ йалавӗпе пролетариат пӗтӗм тӗнчипех ҫӗнтерӗ.

11) В. И. Ленин Собр. соч. т. VI, стр. 273
12) В. И. Ленин, Собр. соч. т. VI, стр 274.
13) Стенографический отчет XV съезда ВКП(б), стр. 366. Партиздат. 1935.
14) И. Сталин. „Об оппозиции", стр. 441.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

Хěвелтухăç фронтěнче республика çарěсен чаçěсем наступлени тума пуçланă, ийулěн 25-мěшěнче Ебро шывě урлă каçнă. Малтанхи çапаçусенчех пăлхавçăсем пе интервантсем питě пысăк сухатусем тунă, республиканěцсен хěснийе тÿсейменсěр вěсем йěркерен тухсах кайала чакма пуçланă. Республиканěцсем 500 çынна йахăн тыткăна илнě тата çар материалěсем нумай тытса илнě. Тыткăна илнě салтаксем хушшинче пуринчен ытла италийанецсем нумайрах.

Италипе Германи авиацийě бомбăсем вăйлăн пăрахнипе республикăлă çарсен наступленине чарасшăн пулнă, анчах та бомбăсем лăрахни республиканěцсен наступлени вăйне хавшатайман. Республиканěцсем фашиссен виçě самолетне персе антарнă.

Левант фронтěнче пăлхавçăсемпе интервентсем Вивер Сегорбо йенче, Теруель—Сагунто çулě тăрăх хирěç тухса атака туни нимěн чухлě те ăнăçлă пулайман.

Хěвелтухăç фронтěнче республиканěцсем малалах наступлени туса пыраççě. Микиненспа Ампоста хушшинчи районра малала куçса пырса, республиканěцсем пăлхавçăсене вěсен позицийěсем çинчен хěсе-хěсе кăлараççě, вěсене Ебро йуханшыв çыранě тăрăх хěсěрлесе хуса пыраççě. Пěр талăк хушшинче республиканěцсем 10 йала йахăн тата халăх пурăнакан ытти чылай вырăнсем туртса илнě.

Республиканěцсем çапла хăвăрт наступлени туса пынипе пăлхавçăсене пăтраштарса йанă. Республиканěцсем, пăлхавçăсен тěп чаçěсенчен уйрăлса кайнă ушкăнěсене хуса çитсе, вěсене тыткăна илеççě. Тыткăна илнисен шучě 3 500 çынна çитнě те ěнтě. Кунсăр пуçне, республиканěцсем вăрçă хатěрěсем нумай туртса илнě.

Республиканěцсен наступленийě калама çук чаплăн, ăнăçлăн пынине Италири фашисла пичет те пытарса тăраймасть. Фашисла хаçатсем, Ебро йуханшывě урлă республиканěцсен пысăк вăйěсем каçнă, тесе паллă тăваççě. Пăлхавçăсемпе интервентсем йěркерен тухсах кайала тарнине тÿрре кăларасшăн тăрăшса, хаçатсем ирěксěрех: „Ебро йуханшывě сывăхěнчи районсенчи халăх республиканěцсене наступлени тума активлăн пулăшнă", тесе çыраççě.

Левант фронтěнче республиканěцсем Вивер патне çывхарса пымалли вырăнсене ăнăçлăн сыхласа тăраççě. Пăлхавçăсемпе интервентсем республиканěцсен позицийěсем çине атакăсем тунă, анчах фронта татма вăй çитереймен. Çапăçу хирěнче тăшманăн çěршер салтакěсем вилсе йулнă.

(ТАСС).

Кěскен

Ийулěн 26-мěшěнче фашиссен самолечěсем Англин „Бельвин" йатлă пăрахучě çине, Валенçирен кăнтăр йенчи Гандиа портěнче тăраканскер çине, бомбăсем пăрахнă. Пăрахут шыва путнă.

Ийулěн 24-мěшěнче тăватă хутчен пит вăйлăн сиксе сирпěннипе Мукденра (Манчжури) Йапонин тар склачě çěмěрěлнě.

(ТАСС).

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центрти Китайра йулашки кунсенче Йапони командованийě хайěн тěп вăйне Цзуцзйан участкине илсе пынă. Йанцзы йуханшывěн тÿрем хěррисем патне ытти фронтсенчен питě пысăк вăйсем куçарса пынă.

Йулашки пилěк кун хушшинче йапонецсем Цзуцзйан çине сывлăшран темиçе хутчен те бомбăсем пăрахса хайарран тапăнна тата шывра тăракан карапсем çинчен персе тăнă. Ийулěн 26-мěшěнче Цзуцзйан патěнчи лару-тăру самайах йăварланнă пулнă. Цзуцзйан çине атака тума йапонецсем 9 дивизи йанă. Йапони çарěсене наступлени тунă çěрте нумай йышлă кавалери тата механизациленě чаçсем пулнă. Цзуцзйана сыхласа тăракан Китай çарěсем йапонецсене хирěç вăйлăн тăраççě. Йулашки пěлтерÿсем тăрăх, çапаçусем хула-ра пыраççě.

(ТАСС).

Чехословакири лару-тăру

Ийулěн 26-мěшěнче Чехословаки правительствин пěчěк составě лару туса, „национальнăçсен кодексěн" пройектне тата „челхесем çинчен", „администрацилě управлении реформи çинчен" тухмали саккун пройекчěсене татăкланах çирěплетнě. Çак виçě документ—судет нимěç партипе тата ытти партисемпе калаçусем ирттернě чух правительствă программи пулса тăраççě.

„Национальнăçсен кодексěнче" Чехословаки конституцин пунктне—республикăри пур гражданесем те,—вěсем мěнле расăпа национальнăç пулнине пăхмасăр,—саккун умěнче пěртан правалă пулса тăви çинчен калакан пункта çырса хунă. Çынсене вěсем пěр-пěр „расăран, йе национальнăçран тăнине кура хěсěрленěшěн айăплисене хайарран айăпласси çинчен калакан пункт уйрăмах пысăк та паха вырăн йышăнса тăрать.

Кодекс государствă аппаратěнчи служăщисен составěнче уйрăм национальнăçсен хисепě çав наци йышě мěнлине кура пулмала тунă, çакна кура ěнтě Чехословакири государствă аппарачěн составěнче нимěç национальнăçěнчен 23 процент пулмала. Республикăри саккунсем кăларакан учрежденисене тата вырăнсенчи самоуправленисене суйлас ěçе те çак йěркепех, национальнăçсен йышě мěнлине шута илсе тăваççě.

„Чěлхесем çинчен" калакан саккун пройекчě, Чехословаки чěлхи республикăри официаллă государствă чěлхи пулса тăрать, тесе çирěплетет. Çакăнпа пěр вăхăтрах вăл кашни национальнăçех, пур государствă оргăнěсене пынă чух, çырнă-тунă чух хăйсен тăван чěлхипе усă курма права парать, вăл оргăнсем çав национальнăç чěлхипе ответ пама тивěç.

Çак документсене пурне те Генлейн партин руководствине панă. Калаçусем çывăх кунсенчех пуçланаççě.

(ТАСС).

Генлейновěцсен провокацийěсемпе террорě

Генлейновěцсем Чехословакире провокацисемпе террор тума халě те чарăнмаççě. Генлейновěцсен партин руководителěсем „распорйажени" кăларнă, вăл — çуртйěрпе пурăнакан генлейновěцсене фашисăма хирěç те çынсене хăйсем йышăнса тăракан хваттерсенчен хăваласа кăларма хушать. Чылай вырăнсенче, тěслěхрен Дубиц хулинче, çак „распорйажениине" пурнăçа кěртме хăтланнă май фашисăма хирěçле çынсем вăйлăн тапăхса кайса отпор панă.

Тепěр хулара вырăнти генлейновěцсем муниципалитет (вырăнти самоуправлени) çурчě çине генлейновěцсен йалавне çакса йанă. Генлейновěцсен çакăн пек киревсěр хăтланăвěпе тарăхнă вырăнти халăх 500 çын муниципалитет умне пуçтаранса фашиссен йалавне халěх кайала антарма ыйтнă. Çакăн хыççăн йалава антарнă.

(ТАСС).

Пěтěм Сойузри халăх перепиçне хатěрленни

ССР Сойузěн Государствă План Комиççи çумěнчи Халăх хуçалăх Учочěн Тěп Управлени Начальникě Саутин йулташ Пěтěм Сойузри халăх перепиçне хатěрленес пирки приказ кăларнă, вăл приказа ССР Сойузěн Халăх Комиссарěсен Совечě çирěплетнě.

Приказ çинче 1939 çулхи Пěтěм Сойузри халăх перепиçне ирттерме йавăçтарнă çынсен мěн чухлě ěçлемели вăхăтне кăтартса панă.

Йанварěн 12-мěшěнчен пуçласа 16-мěшне çитиччен счотчиксем хăйсен участкинчи мěн пур çуртсене кěрсе перепиç пуласси çинчен халăха пěлтермеле.

Йалти вырăнсенче перепиç пайěсене—вěсем халăх-хуçалăх учочěн участкăри инспекторěсен ěçне кěрекен районпа пěрлешсе тăмала тăвас шутпа организацилемеле.

Хуласенче перепиç пайěсем вăтамăн виçě инструктăр участкисене пěрлештерсе тăмала.

Мускавра, республикăсен тата облаçсен центрěсенче перепиç ěçěнчи йěртсе пыракан работниксем валли кěске вăхăтлă курссем тата перепиç ыйтăвěсем йеннěпе вěсен пěлěвне тěрěслессине организацилемеле.

(ТАСС).

Колхозсен уйхирěсенче

Краснодар крайěнчи Марйанск районěнчи колхозсем пучахлă тырăсене вырса пěтернě. Пурě 21.760 гектар вырнă. Комбайнсемпе 20.226 гектар вырнă. Совет Сойуз Верховнăй Совечěн депутачě комбайнер Денисенко пуринчен те лайăх ěçленě. „Коммунар" комбайнпа вăл 522 гектар вырнă, край тăрăх тунă вăтам норма—288 гектар.

Кирăв облаçěнче йěтěн татас ěç массăлăн пуçланнă. Йěтěн татас ěçри стахановецсем кулленхи нормăсене ытлашшипех тултараççě. Шабарск районěнчи Ключевск МТ Станцинчи йěтěн татакан Петров икě кун хушшинче 29 гектар йěтěн пуçтарнă, норма—5 гектар.

(ТАСС).

Совет Сойузě тăрăх

* Йулашки икě çул хушшинче Курск облаçěнчи нумай ачалă амăшсем 33 мěлйун тенкě ытла пособи илнě. Стрелецк районěнче 12 ача амăшě А. И. Ромахина 13 пин тенкě илнě, Л. С. Жильайева 12 пин тенкě илнě.

* Пěлтěр Азербайджанри чей плантатцисем çинчен малтанхи хут 12 тоннă чей çулçи пухса илнě пулнă. Кăçалхи çул республикăри колхозсемпе совхозсем 65 тоннă чей çулçи пухса илме шухăшлаççě.

* Сталинабадран 80 километрта пысăк пахалăхлă çěркăмракě выртакан пуйан выран тупнă. Промышленнăçра усă курма унтан халех ěнтě 1. 500 пин тоннă çěркăмрăк илме пулать.

* Тбилисири Сталин йачěпе тăракан çěнě парк—калама çук лайăх канупа культурă паркě уçăлнă. Вăл парк 10 гектар çěр лаптăкě йышăнса тăрать. Ийулěн 24-мěшěнче паркра 100 пин çын ытла пулнă.

(ТАСС).

Вăрçа хирěçле кун умěн

Августăн 1-мěш—вăрçа хирěçле кун умěн Осоавиахим хула совечě Шупашкарта Атăлăн леш йенче ийулěн 29-мěшěнче тактикăлă занйати туса ирттерет. Занйати „Оборонă тата наступлени" темăпа пулса иртет. Занйатине Осоавиахимăн хулари пуçламěш организацисем, профсойузсем тата ытти ěçсыннисем те хутшăнаççě.

Вăрçа хирěçле кун ыран тенě чух—ийулěн 31-мěшěнче Крупскайа йачěпе тăракан сатра хулари ěççыннисем валли „Пěтěм тěнчери лару-тăру тата çěршыв оборонине тěреклетес задачăсем" йатлă темăпа доклад пулать.

Осоавиахимăн хулари 13 пысăк организацийěсенче — Водосветра, тир-сăран савăтěнче, Стройтрестра т. ыт. вăрçа хирěçле кун çинчен докладсем пулаççě.

Выльав укçи илчě

Туйкилтри (Тутаркас р.) С. Васильйев „ССР Сойузěн Оборонине тěреклетмели зайом" облигаципе 300 тенкě выльав укçа илчě.

Васильйев çěнě зайома 75 тенкělěх çыранса, укçине тÿлесе татрě.

Интернационаллă воспитани ěçě районсенче

МОПР Шупашкар хула комитечěпе Сěнтěрвăрри райкомě лайăх ěçлесе пыраççě. План тăрăх хула комитечěн кăçал член укçипе интернационаллă взнос тата ытти йенěпе 4.829 тенкě те 50 пус пухмала пулнă. Кунта 12.427 тенкě пухнă. Сěнтěрвăрри районěнче çавăн пек укçасене 1.364 тенкě те 30 пус пухса плана 103,67 процент тултарнă.

Шупашкар хула комитечě парти тата ытти организацисемпе тачăн çыхăнса ěçлет. Кăçал Испанипе Китайри вăрçăсем çинчен лекцисемпе калаçусем чылай ирттернě. Хула ěççыннисем тěнчери лару-тăру ыйтăвěпе питě интересленеççě. МОПР ěçне хутшăнса ěçлекен активиссен шучě ÿссех пырать. Урам комитечěсем çумěнче те МОПР йачейкисем пур. Килхуçи хěрарăмсем МОПР ěçне активлăн хутшăнаççě. Калинин урамěнчи Мочалова, Карл Маркс урамěнчи Данилăва, Ленинград урамěнчи Макарăва йулташсем ěççыннисене интернационаллă воспитани парас ěçри активиссем пулса тăчěç.

Массăлă-ăнлантару ěçне тата интернационаллă воспитани парас ěçе лайăх туса пынипе Шупашкар хулинче членсен шучě те самайах ÿсрě. Халě 139 йачейкăра 4.306 член тăрать. Коммунисла аслă йалхуçалăх шкулě, Коопттехникум, 6-мěш номěрлě вăтам шкул тата Ленинград урамěнчи комитет çумěнчи йачейкăсем чи лайăх ěçлекен йачейкăсем шутланаççě. Çапах та нумай организацисенче, ку вăхăта çитсе те йачейкăсем организацилемен.

Патăрйел, Улатăр, Çěрпÿ, Елěк тата ытти МОПР райкомěсем начар ěçлесе пыраççě. Çак районсем член укçи пухас йенěпе те, интернационал взносě пухас йенěпе те плана тултарман.

Ф. Тимофейěв.

Пысăк çăл

Тойкилт йалсоветěнчи „Çěнě пурнăç" колхоз (Тутаркас районě) йалта пысăк çăл турě. Çăлта шыв йаланах 100 кубла метр таран тăрать.

Колхоз тата Штранкă шывě çинче пысăк пěве пěвелерě. Пěве тарăнăшě 5 метра çитет.

К. НИКИТИН

Чайнăйсем уçаççě

Хальхи вăхăтра пирěн республикăра тăватă вырăнта чайнăйсем ěçлеççě. Вăл чайнăйсем пуринчен ытла çынсем нумай пуçтаранакан, пысăк пасарсем пулакан вырăнсенче.

Чайнăйсен хисепě республикăра питě çителěксěр. Вěсене нумайлатмала. Центросойуз йарса панă план тăрăх, пирěн республикăра çак çулта çěнěрен вунă вырăнта чайнăйсем уçмала. Вăл чайнăйсене уçма Центросойуз Чăвашсойуза 24 пин тенкě укçа панă.

Чăвашла календарь

Чăвашиздат 1939 çул валли кăлармалли чăвашла календарьа çак кунсенче пичете пама хатěрлесе çитерет. Календарь ирттнě çулхи пекех, ÿкерчěксемпе тухать. Унта вырăсла календартен илнě материалсем ытларах. Вырăнти материалсене, раснах Çěрěç Халăх Комиссариачě, Сывлăха сыхлав, Çутěç, Собес Халăх Комиссариачěсем йенěпе пулма тивěç усăлă канашсене çителěклě теме çук. Вăл асăннă комиссариатсенче ěçлекенсем хăйсен ыйтăвěсене календаре кěртессине ним вырăнне те хуманнинчен килет. Календарте хăшпěр чăваш поечěсен (Елкер, Уйăп, Ианик) сăввисем пулаççě.

Календарь редакцийěне Полиграфтрест типографийěн кăçал календаре вăхăтра кăларса районсене çитерме тăрăшмала.

Н. В.

Çěнě кěнекесем

● И. Перельман. „Уйăх çине ракетăпа". Çак кěнекере Е. Циолковский шухăшласа кăларнă ракетăпа уйăх çине кайнă пек туса, уйăх çинче мěн-мěн пурри çинчен каласа панă. Унта патша самодержавийě крепěçе хупса чунне илнě вырăс народоволецě Кабальчиц проекчě çинчен те тěплěн кăтартса панă. Кěнекене вăтам çулхи ачасем валли çырнă.

● И. Перельман. „Математикă калавěсем". Тěрлě вăхăтра пулса иртнě ěçсем çинчен математикă чěлхипе çырнă тěлěнмеле калавсен пуххи.

● Фарафонтăва. „Асанне калавěсем". Çěр улпучě патěнче „пусмăрта" мăшкăл курса пурăнни çинчен çырнă. Кěнекене çыраканě хăй улпут патěнче горничнайа пулса хěн курса пурăннă май иртнě асапла пурнăçа лайăх кăтартса парать.

● Булатăв. „Вырăс халăхěн йумахěсем". Шкул çулне çитменнисемпе кěçěн çулхи ачасем валли çырнă илемлě йумахсем. Кěнекене ÿкерчěксем нумай кěртнě.

Кусемсěр пуçне çак кунсенче Чăвашиздатра чăваш йумахěсем тата казах йумахěсем пичетленсе тухаççě.

Ача-пăчасем валли тетте кěнекисем 10 йатлă кěнекесем тухрěç.

МОПР уставěн пройекчě чăвашла тата вырăсла пěр кěнекере пичетленсе тухрě. МОПР организацисен МОПР сиесě пухăначчен çак устав пройектне тěплěн пăхса тухса, мěнле улшăнусем кěртме кирлине палăртса, хăйсем йышăннă тÿрлетÿсене МОПР Чăваш Советне пěлтермеле. МОПРăн районсенчи организацисен çак пичетленсе тухнă кěнекене хăвăртрах вырăнти организацисене çитермеле.

Б. Андрейěв. „Хими çырупе вěрен". 5—6 çул вěреннě йулташсене, колхозниксене хими çырупе вěренме пулăшас тесе çырнă кěнеке. Ÿкерчěксем, таблицăсем пур. Вырăсларан куçарнă.

Йа. Рохлин. „Шахмат çырупе вěренесси çинчен". Вырăсларан çамрăк шахматист Мих. Афанасйěв куçарнă. Кěнеке 1 тенкě те 50 пус тăрать. 3.000 екземпльар пичетленсе тухнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНĂВ.

Трахомработниксене ěçре куллен пулăшса пымала

Трахом—ěлěкхи тěттěм те асаплă пурнăçран йулнă хăрушă чир. Октябěрти революциччен Чăваш çěршывěнче куç чирěнчен сывалмалли пěр пульницă та пулман.

Совет правителстви ěçхалăхěн сывлăхěшěн нумай тăрăшать. Халě пирěн республикăра куç пульницисем 2, куç тухтăрěсен пункчěсем—19, куç фельдшерěсен пункчěсем—10 тата 700 йахăн трахпунктсем ěçлеççě. Кунсăр пуçне тата трахом институчě пур.

Пульницăсем, уйрăмăнах трахпунктсем, трахомпа вăйлăн кěрешеççě. Çакна пула ěнтě трахомпа чирленисен шучě сахалланса пырать. Хăшпěр йалсенче (Тукас, Патирек, Йуманай т. ыт. те) трахома пуçěпех пěтернě. Паллах, ку йалсенче трахомпа кěрешес ěçе чăн-чăнах большевикла туса пынă. Кунти трахпунктсем, йалсовечěсем тата мěн пур общественнăç трахома хирěç пěтěм вăйа хурса кěрешнě. Çавнашкал активлă ěçлесе пыракан трахпунктсем пирěн республикăра сахал мар.

Акă, Катăшри (Вăрнар р.) трахпунктах илер. Уи çинчен И. Нарышкин корреспондент çапла çырать: „Катăш йалěнче трахом чирěпе чирленě çынсен шучě 14 процент пулнă. Трахçестра А. Чудакова тăрăшса ěçленипе трахомпа чирленě 121 çынран 46 çынна сыватнă. Халě трахпункт уйрăм та таса пÿлěмре. Трахомлисем кунта трахпункта пурте йěркелěн çÿреççě. Чудакова час-часах чирлисем патне киле те кайса çÿрет. Колхозниксене санминимум йенěпе кирлě пулăшусем парать. Трахомпа чирленě вăтă çынсем те трахпункт уссине туйса илчěç. Акă, 84 çулхи колхозницă М. Павлăва трахпункта кашни кунах пырать. А. Чудакова 1938 çул пěтиччен трахомран тата 50 çынна сыватма сăмах пачě. Трахпунктра малтанхи пулăшу памалли хатěрсем те çителěклě".

Кун пек тěслěхсене татах та нумай илсе кăтартма пулать. Анчах пирěн республикăра трахомпа кěрешес ěç пур çěрте те çителěклě пулса пырать теме çук-ха. Нумай йалсенче трахпунктсем валли уйрăм пÿлěмсем тупса паман. Трахомработниксем пěр-пěр хресчен çуртне йышăнnă та çавăнта ěçлеççě. Çавăн пек пунктсем: Çěрпÿ районěнче—17, Вăрмар районěнче—30, Йелчěк районěнче—16, Канаш районěнче—17, ытти районсенче те çавнашкалах. Тата нумай трахпунктсенче алçумалли хатěрсем те çук. Ку ěнтě, пěр йенчен, трахпункт çине йалти общественлă организацисем (чи малтанах йалсовечěсем) тивěçлипе çаврăнса пăхманнинчен, тепěр йенчен, трахработник хăй йапăх ěçленинчен килет.

Акă Г. Й. корреспондент çырса пěлтерет:

„Нăрваш йалěнчи (Тăвай районě) трахпункт питě йапăх ěçлет. А. Демйанăвăпа Х. Йефимăва трахпунктра кунне 3—4 сехетрен ытла пулмаççě, ěçленě вăхăтне анчах тăваççě. Трахпунктра тьса мар, сěтел çинче кирлě-кирлě мар йапаласем купаланса выртаççě. Алшăллисем çын пăхмала мар хура, емелсем тусан вăйне пулнă. Демйанăвăпа Йефимăва Нăрвашра трахомлисем миçе çын пуррине те пěлмеççě.

— Хăçан пěтě ку трахом!—тет Демйанăва тарăхса. Ăçтан пěттěр ěнтě трахом çакăн пек йапăх ěçлесе пырсан?"

Çěрпÿ районěнчи Чăрăш Туçа трахпункчě те сÿрěк ěçлет. Ун çинчен А. И. корреспондент çапла çырать: „Хаьь колхозсенче хěрÿлě ěç пуçланчě. Ěç вăхăтěнче час-часах тусанпа йе çÿп кěнипе куçсем пăсăлма пултараççě. Куçсене сыватма трахпункта каймала, анчах унта емелě те, трахçестри те çук. А. Çеменăва трахçестра ниçта та трахпунктра лармасть. Пěрмайăх килěнче—урăх йалта".

Малти Ăнтавăшри (Шăхасан районě) трахçестра Малышкина та çавах. Вăл: „Трахпунктра йулташěсемпе хěвелçаврăнăш тěшлесе ларать. Трахомлисем трахпункта йěркелě çÿремеççě. Малышкина ěçленě чух-е халатне тăхăнмасть. Трахпунктра алă çумалисем те, алшăлли те çук. Йалсовечě пайан кунччен те çак кирлě йапаласене илсе пама шутламан",—тесе çырать М. Çеменăв йулташ.

Хăшпěр йалсовечěсем трахработниксене вăхăтра ěç укçи тÿлемеççě. Сăмахран: Çěрпÿ районěнчи Йěкěрвар йалсовечě трахработнике 6 уйăхшăн ěç укçи тÿлемен т. ыт. те.

Кунсăр пуçне, трахработниксене хăйсен пěлÿлěхне хăпартас тěлěшпе пулăшни кирлě. Районсенче йе подрайонсенче семинарсем туса ирттермелле. Халиччен ку тěлěшпе районсенчи сывлăх пайěсем те, трахоминститучě те нимěн те туман-ха. Трахом институтěнче кадр çителěклě мар пирки кăçал пěр районра та семинар ирттермен, трахработниксене нимěнле консультаци те паман.

Районсенчи врачсем те трахработниксене питě йапăх пулăшаççě. Трахомран сывалнипе сывалманнине тěрěслесе пымаççě

Халě акă уйхирте хěрÿлě ěç пуçланса кайрě. Трахработниксен ěç вăхăчě тесе трахомпа кěрешессине чарса лартмала мар. Трахомран сыватас ěçе тата та вăйлăнрах, йěркеленрех туса пымала. Трахомлă çын каçхине ěçрен таврăнсан питне-куçне лайăх çуса тасаттăр та трахпункта пытăр. Каçхине емелленě куç сывăрнă чух аван канать. Ку ěçе йалсовечěсен, колхоз правленийěсен, бригадирсен тата трахработниксен çирěппěн йěркелемеле.

Трахработниксен ача йаслисене куллен асăрхаса тăмала. Йаслěре сывă ачасене трахомлисенчен уйрăм пăхмала. Çавăнпа та ачасене йаслěне пухиччен пурин сывлăхне те тěплěн тěрěслесе тухмала. Ачасене пăхма трахомлă çынна йахăнне те йамала мар.

Час-часах тата йаслěне çÿремен ачасене ěç вăхăтěнче вăтă çынсем пăхаççě. Вěсем хушшинче те трахомлисем пулма пултараççě. Çавăнпа та киле йулакан вăтăсене лайăх тěрěслесе, вěсене трахомран емелleме, тытăнмала. Çаксем ěнтě пурте трахработниксен пайан тумалли пысăк ěçěсем.

Трахомпа кěрешес ěçре емел таврашě çителěклě пулманнипе чăрмав ан пултăр тесен, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачěн трахпунктсем валли емел таврашě çителěклě тăратмала.

Трахпунктсем трахомпа кěрешес ěçре тěп вырăн йышăнса тăраççě, сывлăха сыхлас ěç оргăнěсен трахпунктсемпе трахработниксене ěçре куллен пулăшса пымала.

ССРС Йустици Халăх Комиссариачěн
ХУСАНТИ ЙУРИДИЧЕСКИ ИНСТИТУЧĔ
1-мěш курса студентсене илет
Йнститут—суд, следстви, прокуратурă, натариат оргăнěсенче, защитниксен коллегинче, госарбитражра тата предприйатисемпе учрежденисен йуридически пайěсенче ěçлеме пысăк квалификацилě йуриссене вěрентсе хатěрлет.
Вěренмели срук 4 çул.
Вăтам шкулсенчен вěренсе тухнисене илеççě. Зайавленисене августăн 1-мěшěччен йышăнаççě.
Испытанисем августăн 1-мěшěнчен 20-мěшěччен.
Адрěс: гор. Казань, ул. К. Маркса, дом № 31-5.

МЕДИЦИНĂ СЕСТРИСЕН УЛАТĂРТИ ШКУЛĔ
1938—39 вěренÿ çулěнче вěренекенсене 1 мěш курса илесси çинчен пěлтерет
ВĔРЕНМЕЛИ СРУК 2 ÇУЛ
15 çулхисенчен пуçласа 35 çулхисем таран 7 çуллă шкул программи чухлěрен кайа мар вěреннисене илеççě. Çичě çуллă шкула тěп предметсемпе „отлично" вěренсе тухнисене испытанисěрех илеççě.
Вěренме кěнě чух çак предметсем тăрăх испытани тăваççě: вырăс чěлхи, арифметикă, алгебрă, геометри, физикă, географи тата фолитграмăта.
Зайавленисене августăн 1-мěшěччен йышăнаççě.
Испытанисем августăн 1-мěшěнчен пуçласа 20-мěшěччен пулаççě.
Зайавленипе пěрле çак документсем кирлě:
1. вěренни çинчен свидетелство,
2. хăш çулта çуралнине кăтартакан свидетелство,
3. сывлăх пирки справкă,
4. икě фотокарточкă,
5. паспорт (пěрле илсе пымала).
Вěренме илнисене валли общежити пур, вěреннине кура стипенди параççě.
Зайавленисене документсемпе пě ве çак адрěсне йамала: г. Алатырь, ЧАССР, Комиссариатская ул., 30, директору школы.
Асăрхаттарни: дирекци хутпа чěнмесěр испытание пыма йурамасть.
Дирекци.
Р-1

Уполномоченный Чувашглавлита № 397
Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, заказ № 581.

К